Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 декабĕр 28
нункун
297(5110) №

# Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, ялхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—65, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕ — 6—23.

## Профсоюзсен паха та пысăк обйазаннăçĕсенчен пĕри

Партин XVII-мĕш съезĕ профессилĕ союзсем çине пит пысăк та паха контрольлĕ функцисене—унчен рабочисемпе хресченсен инспекцин органĕсем пурнăçа кĕртсе пынă функцисене хучĕ. Съезд массăллă контроль организацилесси çинчен йышăннă решенисем вĕсем—ун чухне парти ĕççене мĕнле тунине тĕрĕслессине вăйлатас тĕллĕшпе тунă питĕ те пысăк организацилĕ мероприйатисем пулнă. Парти вăхăтăн-вăхăтăн инспекцилессинчен тăтăшах контрольлессине, ĕççене мĕнле тунине кулленех тĕрĕслессине çине куçма требовани лартрĕ.

Предприйатисенче рабочисемпе хресченсен инспекцийĕсен пĕтĕм прависене тата суту-илÿпе общественнăй питанири контрольлĕ органсене йертсе ырассине хăйсен аллине илсе, профсоюзсем рабочисемпе служăщчисен материальнăй пурнăç условийĕсене малала лайăхлатассишĕн кĕрешме пысăк та паха средствăсем туйанчĕç. Партипе Правительствă ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма кăларнă директивăсене мĕнле пурнăçланине массăлăн тĕрĕслес ĕçе организацилени вăл—профсоюзсем государствă управленине хутшăнса ĕçлемин формисенчен пĕри пулса тăрать.

Суту-илÿн тата общественнăй питанин хупă системи пулнă вăхăтра профсоюз организацийĕсем контрольлĕ ĕçе лавка комиççийĕсем, смотр бригадисем урлă тата ыттисем урлă йе ытларах йе сахаларах аначлăн туса пынă. Хупă распределителĕсене пĕтернĕ хыççăн профсоюз организацийĕсем темшĕн хăйсен контрольлĕ функцийĕсене туса пĕтернĕ, тесе шутларĕç. Магазинсем, столовăйсем, ларйоксем вуншар мĕлйун рабочисемпе служăщчисемшĕн ĕçлеççĕ; магазинсен, столовăйсен ĕçне витĕмлĕ контрольлесе тăрассине организацилессинчен пăрăнса тăни вăл, суту-илÿве тата общественнăй питанине лайăхлатассишĕн кĕрешессинчен пăрăнса тăнине пĕлтерет.

Тавар çавăрăнăшне анлăлатассишĕн, апат-çимĕç продукчисем тата пурне те кăлалах кирлĕ таварсем нумайрах туса кăларассишĕн партипе правительствă пĕрмайах тăрăшаççĕ. Апат-çимĕç промышленнăçĕ, çăмăл тата вырăнти промышленнăç, промысла кооперацийĕ çулран çул нумайрах продукци кăларса пыраççĕ. Нумайах пулмасть-ха «Правда» хаçатра РСФСР апат-çимĕç промышленнăçĕн çулталăк планне срукчĕнех тултарни çинчен пĕлтернĕччĕ. Продуктăсемпе пур çĕрте те пĕр чăрмавсăр суту-илÿ тăвассине йĕркелесе йама тата общественнăй питани пахалăхне вăйлăн лайăхлатса йама кирлĕ майсем кирĕн пĕтĕмĕшпех пур, анчах суту-илÿ организацийĕсем вăл майсемпе пит йапăх усă кураççĕ-ха. Троцкисла-бухаринла шпионсемпе диверсантсем суту-илÿве çĕмĕрсе пынă, столовăйсене хупнă, вăрлама-çаратма хĕтĕртсе пынă, суту-илÿ кадрĕсене пăсса пынă, анчах ку облăçре сăтăрлă ĕçсен йулашкисене чылайах пĕтерсе çитермен-ха. Чылай вырăнсенче, вăл шутрах Мускавра тата Ленинградра сăтăрçăсем хупнă столовăйсене халиччен те пĕтĕмĕшпех çĕмĕрен уçса çитермен-ха.

Совет суту-илÿвĕнчи тÿрĕ ĕçлекен служăщчисен масси çумне сăтăрçăсем, жуликсем, спекулантсем, тавар илекене çаратакансем, растратăсемпе çаратусене ĕрчетекенсем сĕртĕнсе сыпçăннă. Профсоюз организацисем çакăн пек фактсем çине, сăмахран, Подмосковнăй бассейнри горнякисем пурăнакан Волохово посолкинче, складра сахăр ситеклĕ таран пулнă çĕртенех, темиçе кун хушши сахăр сутмасăр тăни çине лăпкă кăмăлпа пăхса тăма пултараççĕ-ши? Йе, Саратăври атă-пушмак хапрăк столовăйĕнче чей пама стакансем ситменни çине профсоюз организацисем çакăн пек лăпкă кăмăлпа пăхса тăма пултараççĕ-ши? Суту-илÿ ĕçне контроль туса тăма парти вĕсене шанса паман-ши вара?

Рабочисемпе служăщчисем хутшăннипе тăвакан общественнăй контроль, магазинсен, столовăйсен ĕçĕсене куллен-ун сăнаса тăни — çаксем вĕсен ĕçĕсене лайăхлатмали майсем. Общественнăй контролĕн вăйне кăтартакан тĕслĕхсене чылай илсе кăтартма пулать. Ленинград облăçĕнчи Ижорск савăтĕнчи общественнăй контролерсем вуншар магазинсен, буфетсен, столовăйсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухнипе столовăйсене аслăлатмала, суту-илÿ ĕçне йĕркелесе йамала, улталаса турттарса паракансене айăпламала тума пултарнă. Мускаври «Красный Богатырь» савăтри массăллă контроль бригади çимĕçсем сутакан палаткăра жуликсем тавар илекенсене пĕрмайах улталаса турттарса панине тăрă шыв çине кăларнă. Макейĕвкăри Карл Маркс йачĕпе тăракан савăтри общественнăй контролерсем столовăйра апата продуктăсем мĕнкуллĕ каймалине, апатсен хакĕсем мĕнкуллĕ тăмалине, ашсене, пахча-çимĕçсене мĕнле пăхса усранине тĕрĕслесе тăрассĕ. Контролерсем столовăй ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса вĕсене пĕтерме пулăшнă. Подольскри механически савăтри столовăй çинчен малтанхи вăхăтра начар йат çÿренĕ, унта рабочисене начар апат çитернĕ, столовой пÿлĕхĕ пĕрмайах ÿсĕр çÿренĕ, столовăйра ĕçлекенсем хушшинче ĕç дисциплини йапăх пулнă. Столовăй ĕçне профсоюз организацийĕ тимлĕн тытăнсанах, унăн ĕçĕ палламала мар лайăхланса улшăннă, апатсен пахалăхĕ лайăхланнă.

Анчах та массăллă контроль ĕçĕн лайăх йенĕсем çинчен калакан фактсем çаплах сахал-ха. Халĕхе профсоюз организацийĕсенчен нумайĕшĕсем контроль ĕçĕ çине ал суласçç. Хăшпĕр çĕртре йачĕшĕн контрольнăй бригадăсем уйăраççĕ, анчах контролерсене инструкцилемеççĕ, контролерсем палăртнă çитменлĕхсене пĕтермеççĕ. Нумай вырăнсенче темшĕн тата магазинсен ĕçне тĕрĕслесси государствă суту-илÿ работникĕсен профсоюзĕн членĕсен ĕçĕ кăна тесе шутлаççĕ. Ку вăл тĕрĕс мар, йăнăш ăнлану. Государствă суту-илÿвĕпе потребкооперации работникĕсен профсоюзĕсен, сăмах та çук, хăйсен ĕçне активлантармала, мĕншĕн тесен, вĕсемшĕн суту-илÿ ĕçĕнчи пуссемпе минуссем пуринчен те ытларах паллă, çаксем вĕсене лайăхрах куранаççĕ. Анчах суту-илÿ организацисен ĕçĕсене массăллă контроль тăвасси—пĕтĕм профсоюзсен ĕçĕ.

Пирĕн çĕршывра пурăнмалли çуртйĕрсен строительстви питĕ пысăккăн саралнă. Партин Сталинла Тĕп Комитечĕпе Совет правительстви çак ĕç çине пысăк тимлĕх хураççĕ; рабочисемпе служăщчисен хватер условийĕсене лайăхлатма пит пысăк укçа-тенкĕ панă. Пĕр кăçалхи çул хушшинче кăна хулари çуртйĕр строительстви валли 3,6 мĕлйард тенкĕ укçа панă. Профсоюзсен тÿррĕм обйазаннăçĕ вăл—çак укçасемпе вырăнлă усă курмала тăвасси, çуртйĕр строительстви планне срукра тата срукчен тултармала тăвасси пулать. Анчах та профсоюз организацийĕсенчен ытларахăшĕ çуртйĕр строительстви ĕçĕн айккинче тăраççĕ. Иленĕр, сăмахран, пирăвăр промышленнăçĕнчи профработниксене. Вĕсем сăлтавпа та, сăлтавсăр та пурăнмалли çуртйĕрсем çитменни çине ÿпкелеме хирĕçех мар. Çав вăхăтрах, профсоюз кÿçĕ умĕнчех Иванăвă облăçĕнче текстильщиксем валли вуншар çуртсем лартас ĕçе пĕтерсе лартнă. Профсоюз работникĕсем çакна ăнланмаççĕ-ши вара: вĕсем рабочисемпе служăщчисен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси çинчен темĕн пек каласçан та, строительсене çĕнĕ çуртсене вăхăтра тутарса пĕтерттерме пултараймаççĕ пулсан, вĕсен пур сăмахĕсем те усăсăр сÿпĕлтетни кăна пулнине?

Ленинградри «Красный Октябрь» савăтри общественнăй контролерсем строительствăри чăн-чăн контроль мĕне пĕлтернине кăтартрĕç. Савăтри рабочисемпе служăщчисем валли çурт тăвас ĕç виçĕ çул хушши тăсăлса пынă пулнă. Государствă çак ĕç валли укçа ситĕлĕклĕ парса тăнă, анчах çак укçапа тăтăшах усă курса пыман. Общественнăй контролерсем—маçтăр Çеменăв, машинист Николайĕв, бригадир Соловйов, токăр Дунец, бригадир Булычов кăçалхи çуркуннерен пуçласа стройкă ĕçĕ мĕнле пынине кулленех тĕрĕслесе тăнă. Вĕсем строительствă кантурĕн начальникне—улталаса пурăнаканскерне тăрă шыв çине кăларнă, стройкăри рабочисен йышне ÿстерттернĕ, ĕçре çирĕп график тутарттарнă тата вăл графика мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе пынă. Çакăн хыççăн çурт строительстви хăвăртлăхĕ уйрăмах ÿснĕ, халь вăл çурта туса пĕтереççĕ те ĕнтĕ.

Туса çитернĕ пурăнмалли çуртсенче çамсем пурăннине профсоюз работникĕсем тĕрĕслесе пыраççĕ-и-ха? Савăт çурчĕсен сахал мар хватерĕсенче, кун пирки рабочисемпе служăщчисем хăйсен «Правда» хаçата йанă çырăвĕсенче те пĕлтереççĕ, савăтран кăларса йанă прогульщиксем, производствă дезорганизатăрĕсем, летунсем пурăнаççĕ. Çав предприйатисенчех час-часах стахановецсене, ĕç çине тÿрĕ кăмăлпа пăхса лайăх ĕçлекен рабочисене валли хватерсем çитмеççĕ.

Магазинсем, столовăйсем, тумтир çĕлекен тата йусакан маçтерскойсем, вĕсен строительствисем, общежитисем, ачасен сачĕсемпе йаçлисем—çаксем çине пурин çине те профессилĕ союзсем пăхса тăни кирлĕ. Ĕçе мĕнле тунине массăлăн контрольлес çĕре общественнăçа анлăн йавăçтарни аппарат ĕçĕнчи бÿрократла пăсăксене тĕппипех пĕтерсе хума, рабочисемпе служăщчисен культурăпа йăла условисене большевиксен партийĕ хушнă пек лайăхлатма пулăшĕ.

(«Правда» уйстатйи, декабĕрĕн 27-мĕш).

## Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран пĕлтерисем тăрăх)

### Хĕвелтухăçри фронт

Испани оборонă министерстви официальнăй сводки кăтартнă тăрăх, декабĕрĕн 25-мĕшĕнче хĕвелтухăç фронтĕнче, Тремп зонинче, Монсеч сектăрĕнче республикă çарĕсем интервентсен Италипе Германи авиацийĕ пулăшнипе туса пынă пур атакисене те пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă. Интервентсем йенче çухатусем пысăк пулнă, çав вăхăтрах хăйсем вимĕн те тăвайман.

Сегре зонинче Итали дивизийĕсем, вăйлă авиаци, артиллери, танксем пулăшнипе республиканецсен позицийĕсем çине атакă тунă. Интервентсем Альматрета йышăнса илнĕ, çакăн чухне вĕсем пысăк çухату тÿснĕ. Пăлхавçăсемпе интервентсем Альфеспа Аспа йенчеле атакă туса пынине республиканецсем пĕтĕмпех сирсе парахнă. Республиканецсем фашиссене 3 танк пĕтернĕ.

Республикă авиацийĕ пăлхавçăсен малти позицисем çине тата пăлхавçăсем пухăнса тăракан вырăнсем çине бомбăсем ăнăçлăн парахнă. Республиканецсен истребителĕсемпе интервентсен самолечĕсем хушшинче сывлăшра çапăçу пулса иртнĕ. Декабĕрĕн 24 мĕшĕнче пулнă сывлăшри çапăçу вăхăтĕнче интервентсене пурĕ 5 самолет персе ÿкернĕ.

Естремадурă фронтĕнче декабĕрĕн 24-мĕшĕнче çĕрле пăлхавçăсем республиканецсен Кабес дель Буей сектăрĕнчи позицисем çине атакă тунине сирсе парахнă.

### Каталони фронтĕнче

Еспань агентстви Барселонăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх Итали дивизийĕсемпе фашисла пăлхавçăсен çарĕсем декабĕрĕн 23 мĕшĕнче Каталони фронтĕнче Файовпа Тремп хушшинче пуçласа йанă наступлени чарăннă. Еброшывĕпе Леридă хушшинчи участкăра тăшман виçĕ кун хушши çине тăрса вăйлăн çапăçнă, чылай вăйсем çухатнă хыççăн, Леридăран кăнтăр-хĕвеланăç чикки патне пыракан лини таранах çитсе тăнă, çапла вăра территорин пĕр пайне йышăнса илнĕ. Анчах та тăшман кунта малала кайни стратеги йенчен илсен усăлах мар, мĕншĕн тесен, республиканецсен оборонин çĕнĕ позицийĕсем тăшман Ебро шывĕ тăрăх наступлени туса пырассине блокадăра тытса тăраççĕ. Çак позици сăрт тÿписен хĕрринче тăрать. Унăн кăнтăрти вырăнĕ—Монт Пинхат. Вăл тинĕс шайĕнчен 438 метр çÿлте тăрать. Çак сăрт тÿписен çурçĕр пайĕ, 70 километр хушши тăшманăн, çуçанталăк туса панă чăрмав пулса тăрать. Вăл сăрт тÿписем Леридăпа Таррагонă хушшинчи çулпа чукунçулне хÿтĕлесе тăрать. Пăлхавçăсем Леридăран пĕр вунă километр кăнтăр йенчеле, Альфес—Аспа лини çине хăйаросăн атакă тăваççĕ. Кунта вĕсем Леридă—Таррагонă чукунçулĕ патне кăнтăр-хĕвеланăç йенчен пырса тухма тăрăшаççĕ. Тăшман çапла тума хăтланса пăхнине декабĕрĕн 25-мĕшĕнче сирсе парахнă.

Фронтăн тĕп участкинче интервентсем Леридă, Балагер, Камарас сушшинчи территори çине наступлени тăвасси пĕтсе ларнă.

Фронтăн çурçĕр участкинче, уйрăмах—Ногер Польйарес йуханшывĕн айалти сектăрĕнче республиканецсем тăшмана хирĕç Монсеч патĕнче хытăн тăраççĕ. Тăшман Балагер — Каматас фронтне татса тухас шутпа кăнтăр-хĕвелтухăç йенчеле малалла кайма тăнинчен нимĕн те тухман.

—○—

## Емиль Вандервельде вилнĕ

БРЮССЕЛ, декабĕрĕн 27-мĕш. Емиль Вандервельде вилнĕ.

* * *

Е. Вандервельде (1866 çулта çуралнă) Бельгири социалисла партине пуçласа йаракансенчен пĕри пулнă, йулашки вăхăтра вăл çак партин хисеплĕ председателĕ пулнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Вандервельде нумай çулсем хушши II-мĕш Интернационалăн паллă деятелĕ пулнă, унта вăл 1929—31 çулсем хушшинче председатель пулса ĕçленĕ. 1914-18-мĕш çулсенчи тĕнчери империализмлă вăрçă вăхăтĕнче тата ун хыççăн та Вандервельде Бельгири король правительствинче тĕрлĕ министр постне йышăнса пынă.

(ТАСС).

## Китайри вăрçă

(Чунцзинран, Шанхайран тата Лондонран ТАСС корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх)

### Центр Китайра

Хунань провинцин çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем Иочжоу йенчеле ăнăçлăн контрнаступлени туса пыраççĕ. Йулашки çапăçусенче йапонецсене Матан хулинчен (Иочжоуран 15 километр кăнтăр йеннерех) хăваласа кăларнă. Халь вăхăтра çапăçусем Иочжоу таврашĕнче пулса пыраççĕ.

Декабĕрĕн 22-мĕшĕнче Деаньрен хĕвеланăçнеле (Цзянси провинци) йапонецсен атакине çĕмĕрсе тăкнă. Йапонецсем икĕ танк тата пĕр броневик çухатнă.

### Кăнтăр Китайра

Кантонран çурçĕр йенче Китай çарĕсем Хуасянь хулине йышăннă. Кантонран хĕвелтухăçнеле, Цзенчен районĕнче, вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Хулан хĕвелтухăç йенчи вырăнĕсене Китай çарĕсем йышăннă. Çав çапăçусенче йапонецсен пысăк çухатусем пулса пыраççĕ. Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче пулнă çапăçура йапонецсен 300 салтак вилнĕ. Цзенчен районĕнче йапонецсен çĕнĕ вăйсем пырса тăраççĕ. Пĕр вăхăтрах Кантона та çĕнĕ вăйсем пырсах тăраççĕ.

* * *

Йапони авиацийĕ, çанталăк начар пулнă пирки тăхтаса тăнă хыççăн, каллех Китай хулисем çине вăрăрла тапăнса бомбăсем пăрахма тытăннă. Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче Йапони самолечĕсем Гуанси Хунань тата Чжецзйан провинцисенчи хуласем çине бомбăсем пăрахнă. Йапонецсем уйрăмах Гуйлинь тата Учжоу (Гуанси провинци) хулисем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Хунань провинцинче Йапони самолечĕсем Чанде хули çине тата Чанша тавраш бомбăсем пăрахнă. Çав кунхех йапонецсен 17 бомбардировщикĕ Сиань хули çине бомбăсем пăрахнă (Шеньси провинци). Бомбăсем пăрахнă хуласенче мирлĕ халăх хушшинче вилнисем тата аманнисем пулнă.

„Дагунбао“ хаçат çапла пĕлтерет: декабĕрĕн 22-мĕшĕнче йапонецсен Ухури позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă хыççăн кайала таврăнакан китайсен 3 самолечĕпе йапонецсен темиçе самолечĕ хушшинче сывлăшри çапăçу пулса иртнĕ. Вăл çапăçура Йапонин пĕр бомбардировщикне персе антарнă. Китай самолечĕсем хăйсен вырăнне ăнăçлăн çитсе ларнă.

### ХРОНИКĂ

Кăçалхи декабĕрĕн 23-мĕшĕнче Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕпе В. П. Потемкин йулташпа Финляндин Мускаври чрезвычайнăй посланникĕ—полномочнăй министрĕ А. С. Ирйе—Коскинен хушшинче ССР Союзĕн правительствипе Финляндин правительстви Совет Союзĕпе Финляндин хушшинчи государственнăй чикĕ линийĕ иртсе пынине кăтартакан документсемпе картăсене çирĕплетесси çинчен нотăсем улăштарса илнĕ, вăл документсемпе картăсене Совет Союзĕпе Финляндин чикĕне демаркаци тăвакан комиççийĕ хатĕрленĕ.

(ТАСС).

## Аслă летчика В. П. Чкалăва асăнса

Епĕр пурăнакан вăхăтри аслă летчика, Совет Союзĕн Геройне Валерий Павлăвич Чкалăва ĕмĕрĕмĕр асăнмала тăвас шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кашни çулах В. П. Чкалăв йачĕпе виçшер авиаци премийĕ—50 пиншер тенкĕ—памала тунă, вăл премисене чи лайăх конструкцилĕ самолет тунăшăн, чи лайăх моторшăн йе мотора пысăк лайăхлатусем кĕртнĕшĕн тата çар самолечĕсен ескадрилйи вĕçев ĕçĕнче чи лайăх çитĕнÿсем тунăшăн параççĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Мускавра В. П. Чкалăв памятникне лартма, Горький хулинчи Пионерсен Дворецне тата строительнăй института, Осоавиахимăн Мускаври Центральнăй аероклубне В. П. Чкалăв йатне пама, çавăн пекех тата Мускаври Садово-Земляной вал урамне Чкалăв урамĕ тесе йат пама йышăннă.

Горький облĕçтăвкомне 1939 çулти декабĕрĕн 15-мĕш тĕлне Чкалăвск хулинче культурă çурчĕ туса лартма, вăл çурта В. П. Чкалăв йатне пама хушнă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăш-Çар Вăйĕсен летчиксем хатĕрлекен пысăк шкулĕсенчен пĕрне В. П. Чкалăв йатне пама Оборонă Халăх Комиссариатне хушнă.

Горький облĕçтăвкомне Чкалăвск хулинчи В. П. Чкалăв пурăннă пÿрте асăрхаса тăма тата ун çине мемориальнăй хăма çакса хума хушнă.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Оренбург облăçĕнчи ĕççыннисем, парти, совет, профсоюз, комсомол, колхоз организацийĕсемпе ытти общественнăй организацисем, авиаци чăçĕсем тата ытти çар чăçĕсем Оренбург хулине Чкалăв хули, Оренбург облăçне Чкалăв облăçĕ тесе йат пама ыйтнине пурнăçа кĕртнĕ.

(ТАСС).

## Ĕçлев кĕнеки— тÿрĕ ĕçлекен работникăн мухтавĕ

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ĕçлев кĕнекисем тăвасси çинчен йышăннă постановленине çĕршывра анлăн сÿтсе-йаваççĕ.

Рабочисем, служăщчисем, специалиссем правительствăн çак ĕçне пĕр кăмăллă пулса ырлаççĕ. Ĕçлев кĕнеки туни вăл хамăр çĕршыври рабочисемпе служăщчисен нумай мĕлйунлă çарне учота илес ĕçе йĕркелет, дисциплинăна тата ĕç тухăçлăхне хăпартать, предприйатисен ĕçĕсен пахалăхне çĕклет.

Казах ССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, медицинă наукисен докторĕ В. Г. Йермолайĕв çапла калать:

— Ĕçлев кĕнеки — тÿрĕ ĕçлекен работникăн мухтавĕ. Вăл кĕнеке работник ĕç çине мĕнле пăхнине, тава тивĕçлĕ ĕç ĕм тунине, квалификацине ÿстерсе пынине характеристикă парать. Çав вăхăтрах Ĕçлев кĕнеки туни — летунсемпе прогульщиксене хытăн çапни пулать.

Кизеловск районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан шахтăра ĕçлекен проходчик-стахановец Стубайло йулташ: правительствă Ĕçлев кĕнеки тăвасси çинчен йышăннă постановленине Кизеловск районĕнчи шахтĕрсем хĕрÿлĕн ырлаççĕ, тесе пĕлтерет. Çапла туни, — тесе çырать Стубайло йулташ, — пĕрремĕшĕнчен, летунсен — производствă дезорганизатăрĕсен пĕр предприйатирен теприн предприйатине куçса çÿрес кăмăлне пĕтерет, иккĕмĕшĕнчен, тÿрĕ ĕçлекен работникăн авторитетне тата çÿлерех çĕклет.

„Епĕ, сăмахран, çакăнпа мухтанма пултаратăп: манăн Ĕçлев кĕнеки епĕ чернорабочирен бригадир, техникăлă вĕренÿн отличникĕ, çĕркăмрăк стахановецĕ пуличчен утса тухнă çула — Калинин йачĕпе тăракан шахтăра епĕ 18 çул ĕçленине кăтартса парать, — тет Стубайло йулташ. — Уйăхсеренех епĕ заданисене чылай ирттерсе тултарса пыратăп. Епĕ çĕркăмрăкшăн стахановла кĕрешнипе нумай хавхалантарусемпе паллă тунă. Хамăн Ĕçлев кĕнекине йулташсене кăтартма намăс пулмасть мана: унта манăн хисеп грамачĕсем виççĕ пуррине, хам йатпа панă икă сехет тата ударник значокĕ пуррине çырса хураççĕ“.

(ТАСС).

## Совет Союзĕ тăрăх

●● Декабĕрĕн 24 мĕшĕнче „Сибжилантрацит“ трестăн 4-мĕш номерлĕ шахтă горнякисем çулталăк планне тултарнă. Çавăн пекех, „Дзержинскуголь“ трестăн 11-мĕшпе 12-мĕш номерлĕ шахтисем те çулталăк планне тултарнă.

●● Томскри музыкă училищи çумĕнче çитĕннĕ çынсем валли музыкă шкулĕ уçнă. Вăл шкула 43 çын илнĕ. Вĕренмелли срук — пĕр çулталăк.

●● Чимкентри Калинин йачĕпе тăракан тăхлан савăтĕнче стахановецсем, инженерсемпе техниксем — 25 çын вăгли чĕлхине вĕренеççĕ. Аслă групăсенче вĕренекенсен вăгли чĕлхипе вулама тата çырма вĕренсе çитнĕ те ĕнтĕ.

●● Мускавра конференци-курса пуçтарнă тавралă республикăсенчи писательсем столицăри культурă учрежденийĕсенче пулса вĕсемпе паллашаççĕ, литературăпа искусствă енĕнчи маçтăрсемпе тĕл пулса калаçаççĕ. Декабĕрĕн 26 мĕшĕнче конференцире „Горький кунĕ“ туса ирттернĕ. А. М. Горький музейĕнче çамрăк писательсем „Горький мĕнле ĕçленĕ“ темăпа лекци итленĕ тата аслă писателĕн алçырăвĕсемпе паллашнă.

(ТАСС).

Республикăлă Испанире

Республикăлă Испани хĕрарăмĕсем фронта кайнă арçынсем вырăнне оборонă промышленнăçĕн предприйатийĕсенче ĕçлеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çамрăк работница самолет шăççине пуçтарать.

ТАСС фотохроники.

## ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

# Вырăна тухса консуљтаци парас пулаť

ВĂРНАР. Нурăс йалĕнче учителсем, медицина, кооперации работникĕсем тата почтă уйрамĕнче ĕçлекенсем пĕтĕмпе 60 çынран та иртеççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленийĕ тухнă хыççăн Нурăсри педучилищă çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци йалти интеллигенцин пукуне туса иртерчĕ.

Йалти интеллигенци ПСК(б)П историне таранăн вĕренме тытăнчĕ. Кашни коммунист, комсомолец тата партире тăман интеллигент болљшевиксен партии историне тимлĕн вĕренет.

П. Васильев йулташ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренме кашни кун икĕ сехет вăхăт уйăрса хунă. Вĕренÿре учебниксĕр пуçне, Ленин—Сталин произведенийĕсемпе тата хаçатсенче пичетленсе тухакан консуљтацилĕ материалсемпе усă курать. Хаçатсем çинчи консуљтацилĕ материалсене пурне те касса илсе пĕр çĕре çĕлет. Кунсăр пуçне ПСК(б)П историне вĕренес çĕрте ăна радио та пысăк пулăшу параť. Вăл радио тăрăх паракан консуљтацилĕ докладсемпе лекцисене пĕрне те итлемесĕр хăвармасť. Халĕ вăл ку вăхăтчен „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн" иккемĕш сыпакне вĕренсе пĕтерет, виççĕмĕш сыпака вĕренет.

Нурăсри педучилищăри учителсемпе туллимар вăтам шкулсенчи учителсем „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" харпăрхăй тĕллĕн вĕренессине лайăх йĕркелевĕ. Вĕсем ПСК(б)П историне вĕренес ĕçре педучилищă библиотекинчи Ленин—Сталин произведенийĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Ăнланман ыйтусем пулсан, консуљтант Ф. Романăв йулташран ыйтса пĕлеççĕ. Романăв йулташ вĕсене лайăх тата тĕплĕн ăнлантарса параť.

Нурăс пољницинче ĕçлекен врачсемпе фельдшерсем те „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" тăрăшса вĕренеççĕ. Сахалтарах вĕреннĕ работниксем „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" пĕрремĕш звенопа—парти истории виçĕ етапĕ тăрăх вĕренме тытăннă.

Пољницăри работниксем консуљтаци илме районри парткабинета (15 çухрăма) кайса çÿреймеççĕ. Вĕсене вырăнта пулăшу парассине йĕркелемеле.

Кашни коммунист, комсомолец, колхозник „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренме тăрăшаť. Анчах та кашни пĕлмен ыйтушăнах райова кайма май килмест. Çавăнпа та районри парти кабинечĕн хăйĕн лайăх хатĕрленнĕ консуљтанчĕсем урлă вырăнсене тухса консуљтаци иртерессине йĕркелесен питех те аван пулмала.

Ст. Улангай.

# Парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемеле

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йалти организацийĕсен ÿсĕмĕ мĕнле пынине йаланах тĕллĕн сăнаса пыраť. 1938 çулти ийуљ уйăхĕнче йышăннă постановленире парти Тĕпкомĕ партин йалсенчи организацийĕсем коммунисăм ĕçне чĕререн парăннă чи лайăх ĕçлекен колхозниксене, колхозницăсене, агрономсене, учителсене тата ытти работниксене парти ретне илес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕ.

Партин Турхан районĕнчи организацийĕ Тĕпком постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемест-ха. 1938 çулти ийуљ уйăхĕнчен вара парторганизаци пурĕ 19 çынна çеç парти ретне илнĕ. Уйрăм пуçламĕш парторганизацисем парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Районри финанс пайĕпе Хатĕрлĕв Халăх Комиссариачĕн упољномоченнăйĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем икĕ çул хушшинче те пĕр çынна та парти ретне илмен. Çак организацисем партире тăман активран уйăрăлса калнă, актива болљшевикла воспитани парас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ. Парти райкомĕ те начар ĕçлекен организацисене кирлĕ пек пулăшу памасť-ха.

Йалта колхоз стройĕн çĕнтерĕвĕшĕн халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе пиçĕхнĕ, общественнăй ĕçре активлă ĕçлекен йулташсем сахал мар. ПСК(б)П райкомĕн, райкомăн инструкторĕсен, пуçламĕш парторганизацисен хăйсене пур ĕçре те кăтартнă йулташсене парти ретне кĕме пулăшмала. Анчах та Мартынăв, Бељаков, Орлов, Федаров, Гайкин йулташсем хăйсем тахçантанпа пĕлекен йулташсене партине кĕме рекомендаци пама „шиклеисе" тăраççĕ.

Çавăн пекех кунта комсомолецсене партие илес ĕç те çителĕксĕр тăраť. Икĕ çул хушшинче те 17 комсомолеца çеç ПСК(б)П ретне илнĕ. Ку ĕçре комсомол райкомĕ те, пуçламĕш организацисем те айăплă. Вĕсем парти ретне кĕме тăрăшакан йулташсене кирлĕ таран пулăшу памаççĕ.

## Республикăлă Испанире

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикăлă Испанин çамрăк љотчикĕ вĕçев умĕн.

(Бюро-клише ТАСС).

# ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Елĕк райĕçтăвком президиумĕ автомашина илме тата гараж тума укçа памашкăн ыйтнине пăхса тухрĕ.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ку ыйту тăрăх йышăннă постановленире çакна палăртрĕ: Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕп кăтарту панă пулин те Елĕк райĕçтăвком президиумĕ финанспа бÿджет дисциплинине пăсса пынă, райĕçтăвком аппаратне вађђи уйăрнă укçа-тенкĕ хисепĕнчен чылай нумай ÿстерсе тăкакланă. Райĕçтăвком вăл укçа-тенкĕрен, Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен ыйтмасăрах, автомашина илсе 10.000 тенкĕ, гараж туса 10.000 тенкĕ саккунсăр тăкак тунă. Елĕк райĕçтăвкомĕ çак тăкаклавă укçа-тенкĕве йÿнеçтерме Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен 20.000 тенкĕ укçа уйăрса пама ыйтнă.

Елĕк райĕçтăвкомĕ ыйтни административлă тата управлени тăкакĕсене чакарса пыма кăтартса панине хирĕç пыраť тесе шутласа, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Елек райĕçтăвкомĕ ыйтнă укçа-тенкĕне памала мар турĕ.

Финанспа бÿджет дисциплинине пăснăшăн, райĕçтăвком аппаратне вађђи уйăрса панă укçа-тенкĕ хисепне ÿстерсе тăкакланăшăн, саккуна пăсса гараж тунăшăн Елĕк райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçленĕ Иварбеăва ответ тыттарма материала судпа следстви органĕсен аллине пама йышăнчĕ.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ бÿджетпа пăхнă укçа-тенкĕне тĕрĕс тăкаклассишĕн халăх комиссариачĕсен, учрежденисен руководителĕсем тата райĕçтăвком председателĕсем хăйсем ответлă пулни çинчен асăрхаттарчĕ.

## Стаханăвла ĕçленипе

Çĕмĕрле комбинатĕнчи урапа цехĕнче ĕçлекен Алексей Йĕрăнтайĕв йулташ 1937 çулта ытти рабочисенчен нимĕнпе уйрăмлăхпа та паллă пулман. Хутла сахал пĕлекенсен шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер пулнă.

Халĕ Йĕрантайĕв пачах урăх çын. Вăл техникăна вĕренсе алла илнĕ çеç мар, политикă йенчен çÿлте тăракан çын. Вăл хăйĕн лайăх опычĕпе темиçе çынна стаханăвец пулма пулăшрĕ. Пайан вĕсен шучĕ ирнĕ çулхинчен 10 хут нумай шутланаť. Цехра ĕçлекен 327 çынран стаханăвецсем 239, ударниксем 81 çын. 211 рабочи социалисăмла ăмăртсаĕçлеççĕ. 174 çын техминимум кружокĕсенче вĕренеççĕ. Стаханăвла йухăм вăйланса пыни цех ĕçне хăвăрттăн лайăхлатма май пачĕ. Пĕр виçĕ уйăх кайарах цех хăйĕн планне 65 процент çеç тултарса пынă. Цех коллективĕ хастарлăн тăрăшса ĕçлесе, прорыва пĕтерсе çулталăк планне декабĕрĕн 1-мĕш тĕлне 101,4 процент тултарчĕ. Декабĕрĕн 21-мĕшне çулталăкри программăна 109,3 процент тултарчĕ.

Уйрăм бригадăсем тăрăх илсен плана Патрăв бригади 117 процент, Куликов бригади 106 процент тултарнă. Цехра икшер нормă тултаракансен çарĕ ÿсет. Вĕсен ретĕнче: Григорйĕв, Николайĕв, Толстов, Кочетков, Никитинă тата ытти нумай йулташсем.

Цех—ÿсĕм çулĕ çинче. Рабочисемпе инженерла техникла работниксем йалан лайăх ĕçлесшĕн кĕрешеççĕ. Комбинат руководителĕсен, партипе профсойуз организацисен задачĕ — пĕтĕм коллектива мобилизацилесе, тунă ÿсĕмсене çирĕплетсе цеха çичĕ çулта йаланах стаханăвла ĕçлекен тăвас пулаť.

Александрăв.

# Трактăрсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа йусамала

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Трактăрсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемели машинăсене йусас ĕç мĕнле пыни çинчен" йатарласа постановлени йышăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Çав хушăра машинă-трактăрлă станцисен трактăрсене йусамали тăваттăмĕш квартăл планне тултарассишĕн кĕрешĕве анлăн сарса йама май пулнă. Анчах, апла пулсан та чылай МТС-сенче трактăрсене йусас ĕç çаплах начар пыраť. Пилĕк кун хушшинче—декабĕрĕн 20-мĕшĕпе 25-мĕш хушшинче капитаљнăй ремонтра 4 процент, текущчăй ремонтра 6,3 процент кăна ÿсĕм тунă. Трактăрсене йусас тĕлĕшпе Ишлей, Пăрачкав, Трак, Шупашкар, Тутаркас, Йетĕрне МТС-сем питĕ начар ĕçлеççĕ. Пăрачкав МТСтанцин тăваттăмĕш квартăлта 12 трактăр капитаљнăй ремонт тумала пулнă пулсан, 1 трактăр анчах йусанă. Трак МТС-че капитаљнăй ремонтран 7 трактăр кăлармала пулнă пулсан, пĕре те йусаман.

Кувакинă, Вăрмар, Çĕрпÿ, Тăвай МТС-сем трактăрсене капитаљнăй ремонт тумали тăваттăмĕш квартăл планне тултарнă. Çав вăхăтрах вăл МТС-сенче текущчăй ремонт ĕçĕ йулса пыраť. Тăвай МТСтанцинче 10 трактăр çийелтен йусамала пулнă, анчах ку ĕçе пачах тытăнман.

Шăнкăртам МТС-че текущчăй ремонт планне 200 процент, Йелчĕк—100 процент, Шăмăршă—200 процент тултарнă. Çак машинă-трактăрлă станцисенче капитаљнăй ремонт пуçланман.

Хашпĕр МТС-сенче трактăрсене пысăк пахалăхпа йусассишĕн кĕрешни çук. Ăна çак пример та лайăх кăтартса параť. Куславкка МТС-ци (директăрĕ Иванов) Çĕрĕç Халăх Комиссариатне 8 трактăр йусанă тесе сводкă параť. Анчах вырăнта тĕрĕслесе пăхсан, пачах урăхла. „Йусанă" 8 трактăртан пĕри те ĕçлеме хатĕр мар.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленинче трактăрсене йусакан рабочисемпе трактăриссем вађђи ĕçлеме тата йăла условисем туса пама кирли çинчен çирĕп асăрхаттарса хăварнăччĕ. Апла пулсан та çавнашкал çирĕп кăтартăва ку вăхăтченех МТС-сенче пурнăçа кĕртсе пыма тытăнман. Сăмахран, Куславкка МТС-нех илер. Кунта рабочисене ĕçлеме лайăх условисем туса паман. Маçтерскойне 3—4 кунта кăна хутăççĕ. Трактăриссем общежитинче сивĕ пирки хывăнмасăр çывăраççĕ.

Рабочисем хушшинче дисциплинă начар. Бригадирсем, çавнашкалах уйрăм рабочисем, ĕçе кайа йулса тухаççĕ. Ĕçре социалисăмлă ăмăртăва тата стаханăвла йухăма сарса пымаççĕ.

Трактăрсене йусакан рабочисене тата трактăриссене ĕçлеме лайăх условисем туса парассишĕн кĕрешесси—МТС директăрĕсен ответлă ĕçĕ пулса тăмала. Çакна хăшпĕр МТС руководителĕсем ку вăхăтченех ăнланса илмен пулас.

—О—

## Чăваш республикĕнчи МТС-че тăваттăмĕш квартăлта трактăрсене йусамали плана мĕнле тултарса пынине кăтартакан

## СВОДКĂ

(Декабĕрĕн 25-мĕшне, процентпа)

| МТС-сем | Капитаљнăй ремонт | Текущчăй ремонт |
|---|---|---|
| Улатăр | 80.0 | 40,0 |
| Елĕк | 50,0 | 57,1 |
| Патăрйел | 55,5 | 85,7 |
| Вăрнар | 50,0 | 38,4 |
| Йĕпреç | 60,0 | 30,0 |
| Ишлей | — | 15,8 |
| Канаш | 62,5 | 50,0 |
| Куславкка | 66,6 | 33,3 |
| Кувакинă | 109 | 41,6 |
| Сĕнтĕрвăрри | — | 33,3 |
| Пăрачкав | 8,3 | 23,6 |
| Тутаркас | — | 31,6 |
| Трак | — | 46,1 |
| Вăрмар | 100 | 64,1 |
| Çĕрпÿ | 100 | 41,6 |
| Шупашкар | — | — |
| Шăмăршă | — | 200 |
| Шăхасан | 77,7 | 58,3 |
| Шăнкăртам | — | 200 |
| Çĕмĕрле | — | — |
| Йетĕрне | — | 50,0 |
| Йелчĕк | — | 100 |
| Тăвай | 116,6 | — |
| Республикепе | 52,4 | 45,1 |

АСĂРХАТТАРНИ: декабĕрĕн 25-мĕшне сводкăсем Улатăр, Трак, Вăрмар, Шăмăршă, Шăнкăртам, Çĕмĕрле тата Йелчĕк МТС сем тăратнă, ыттисем тăратман.

# Обйазатĕлствăсене ытлашшипех тултарнă

Тусай йалсоветне (Трак р.) кĕрекен „Четай" тата „Шимар" колхозсем государствăна умĕнчи обйазатĕлствăсене вăхăтра тултарас тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. «Четай» колхоз государствă умĕнчи пур обйазатĕлствăсене те тултарнă. Махорка, клевĕр вăрри тата сĕт-çу-кантăр ытлашшипех панăшăн государствăран 10 пин те 900 тенкĕ преми-надбавкă илнĕ.

„Шимар" колхоз та государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене вăхăтра тата ытлашшипех тултарнăшăн 3.700 тенкĕ преми-надбавкă илнĕ. Ку колхоз кăçал 40 ĕне вырнаçмалăх çĕнĕ чаплă вите туса лартрĕ.

«Шимар» тата «Четай» колхозсем кăçал Surăм шывĕ çинче пĕве турĕç. Çав шыв çинчи арман ĕçлеме тытăнчĕ. Халђ ĕнтĕ колхозниксем иртнĕ çулсенчи пек арман авăртма çич-сакăр çухрăма çÿремеççĕ.

Г. Закамский.

# „Икçĕр çемйе" тата Франци халăхĕ

Нумайах та пулмасť господин Едуард Даладйе, Францин премйер-министрĕ пулнăчченех, çапла калана: «Административлă канашсене пула тата банксен ÿсе пыракан ролĕ пулăшнипе икçĕр çемйе Францин економикинче кăна мар, вĕсем тата Францин политикăлă пурнăçĕнче те чăннипех хуçасем пулса тăчĕç»—тенĕ. Даладйе господинăн çак сăмахĕсем çинчен Жак Дукло Франци правителствин политики пирки пренисем пынă вăхăтра депутатсен палатине астутарнă.

Унтанпа Франци правителствин хађхи вăхăтри пуçлăхĕ Францине хăйсен аллинче тытса тăракан «икçĕр çемйене» хирĕç хыттăн тухса каланăранпа ытлашши нумай вăхăт иртмен. Анчах господин Даладйе йертсе пыракан правителствă шултăра капитал ирĕк-кăмăлне пурнăçа кĕртсе пыракан пулса тăнă.

Правителствă политики пирки пынă пренисем хыççăн, Франци палатине суйланă чухне сасăланин итогĕсем ун çинчен лайăх кăтартса параççĕ. Даладйе правителстви влаçра реакцилĕ тата фашисла партисем пулăшнипе кăна тытăнса тăма пултарнă. Господин Даладйе политикишĕн гитлĕрла агент Фланден, полици начаљникĕ пулнă Кьяпп, уççăнах фашисла заговорщиксем хутне кĕрсе хăйĕн йатне çĕртнĕскер, йулашкинчен вара, де ља Рок бандинчи заговорщиксем хăйсем те сасăланă. Вĕсем сасăланипе «икçĕр çемйе» хађхи правителствăна çăлса хăварнă.

Правителствăна хирĕç коммунисла тата социалисла депутатсем пролетарилĕ пĕрлĕх фрончĕпе сасăланă. Вĕсем çумне «социалистический и республиканский союз» фракцинчи депутатсен пĕр пайĕ хутшăннă. Радикалсен партийĕнче,—вăл партин председателĕ Даладйе хăй пулса тăраť,—пысăк сапаланчăк. Радикалсен сакăрвунă депутачĕсем, халăх фронтĕнчен уйăрăлса реакципе пĕрле блок тунăскерсем, правителствăшăн сасăланă, радикалсен вăтăр депутачĕсем хирĕç те тата майлă та сасăламан, икĕ радикал правителствăна хирĕç сасăланă. Хирĕç те, майлă та сасăламаннисем хушшинче радикалсен партин пысăк деятелĕсенчен çаксем пулнă: депутатсен палатин председателĕ Едуард Еррио, йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Ивон Дељбос, авиаци министрĕ пулнă Пйер Кот тата ыт. те.

Франци палатинче сасăлани çакна палăртнă: Францин хађхи правителстви чипер пынă çĕртех хăйĕн программине, хăйĕн ориентацине тата базине улăштарнă. Малтанхи вăхăтра вăл халăх фронтне пĕрлешĕннĕ партисем çине тайăнса тăнă, хађхи вăхăтра—реакци çине тайăнса тăраť. Анчах реакци Даладйе господиншăн ахађ тĕкĕ пулса тăнипех çырлахмĕ: ахађтен мар Франци палатинче пренисем пынă чухне реакцилĕ депутатсем министрсен портфелĕсене пама уççăнах ыйтнă.

Францин хађхи правителствин политики сылтăмала аталанса пынă пирки иккĕленмели çук. Анчах та хађхи вăхăтра Даладйе майлă пулса тăракан радикалсен сакăрвунă депутачĕсем малашне мĕнле позици тытса пырĕç-ши? Çавăн пекех правителствă политикине хак панă чухне хирĕç те тата майлă та пулса сасăламан радикалсен вăтăр депутачĕсем малашне мĕнле позици тытĕç-ши?

Манма кирлĕ мар, икĕ уйăх кăна кайала, тăватă державăн Мÿнхĕнри конференцийĕ хыççăн, коммунисла фракци Франци палатинче правителствă политикине хирĕç çирĕп пĕрлĕхлĕ пулса сасăланă. Ун чухне ытти фракцисенчен икĕ депутат çеç коммунисемпе пĕрле пулса сасăланă. Реакционерсем: хађ ĕнтĕ епĕр коммунисла партине айаккала сирсе йатăмăр, тесе шутланă. Анчах реакци шанни пурнăçа кĕмен.

Парламентра хăйĕнче те тата унăн тулашĕнче те правителствă тайăнса тăракан базă тăвăрланса пыраť. Мÿнхĕнри конференци хыççăн реакци пролетарилĕ пĕрлĕх фрончĕпе халăх фрончĕн речĕсене вăхăтлăха патратса йама пултарнă. Анчах пролетарилĕ пĕрлĕх фрончĕ хăйĕн речĕсене хăвăрт пĕтĕçтернĕ. Ĕççыннисен массисенче халăх фрончĕн вăйĕсем çирĕпленсе, тĕреклене пыраççĕ.

Хађхи вăхăтра правителствăна йертсе пыракан çынсен тултипе шалти политики çĕршывăн чăн-чăн интересĕсемшĕн пĕртте килĕшÿлĕ маррине Францири ĕççыннисем ытларан та ытларах ăнланса илсе пыраççĕ.

Мÿнхĕнри конференцире Франципе Англи представителĕсем Германи агрессăрне Францин сойузникне—Чехословакине туртса çурма пулăшнă. Акă Мÿнхĕнри каварлашу мĕн патне илсе пынине паллă журналист Анри де Кериллис йепле хаклаť (калас пулаť, вăл палатăн пĕррĕмĕш депутачĕ вырăнĕнче йулашки хут сасăланă чухне хăйĕн сасне Мÿнхĕншĕн ответлă пулса тăракан правителствăшăн панă):

**«Ĕлĕкрех авиаци, ăна Германине хирĕç тăратма пултарнă пулнă,—Чехословаки авиацине тата унăн «Вису çĕмĕш империйĕн» чĕрине хирĕç тăратнă сывлăшри базисен стратеги тĕлĕшĕнчен çав тери лайăх позицине шута илсен,—пайанхинчен икĕ хут йе виçĕ хут вăйлăрах пулнă. Унчухне вăрçă-мĕн пулсан Германин Чехословаки фронтне ирĕксĕрех 40 дивизи тăратмала пулнă пулсан, пайан çав 40 дивизине, Судетра туса йĕркеленĕ 6 дивизипе хушса çирĕплетнĕскерсене, малтанхи хут наступлени тума пуçласанах пире хирĕç тăратма пултараť. Ĕлĕкрех Германине хĕвелтухăçĕнче тырпул тата нефť базисем патне пырса кĕме йăвăр пулнă, мĕншĕн тесен, ăна Чехословакин хăватлă бастионĕ пÿлсе тăнă, пайан вăл çав базăсем патне ирĕккĕнех пырса кĕрет. Ĕлĕкрех вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех пирĕн йенче Чехословакин 1.200.000 салтакĕ пулнă пулĕччĕ, Германи гегемонийĕ хăратса тăракан çĕршывсен вăйĕсене тата вĕсем епĕр çĕнтерсенех пирĕн çума пĕрлешме пултаринне шута илмесĕр те; пайан епĕр хамăрăн чи лайăх сойузникĕсене çухатрăмăр».**

Çакнашкал ĕнтĕ Мÿнхĕнри каварла шун хурланчăклă итогĕсем. Тĕлĕнмели çук, Мÿнхĕнре туйанна позицисемпе усă курса, агрессăрсем мĕнпур пÿтсерлĕхпе Францине хĕсеççĕ.

Итали фашисĕсем шавлă демонстрацисем туса ирттереççĕ, вĕсем Францирен Савойăна (Францин кăнтăр йенчи облаçĕ), Корсикăна, (Вăтаçĕр тинĕс çинчи утрав), Тунисa (Çурçĕр Африкăри колони) туртса илме ыйтаççĕ. Кунтан та ытларах: Итали хăйĕн колонийĕнче — Ливире Тунис патĕнче пысăк çарсем пухаť.

Агрессăрсем пĕр-пĕрин хушшинчи рољсене валеçнĕ. Итали Францине вăрçăпа хăратса тăнă вăхăтра, Германи Францине Германин пĕрлехи декларацине алă пусма хăйĕн йут çĕршыв ĕçĕсен министрне Риббентропа Парижа йараť. Германири фашисла пичет тата Францин правителствă хаçачĕсем çав декларацин пĕлтерĕшне, унта пушă сăмахсемсĕр тата пĕр-пĕринпе «мирлĕ тата ырă кÿршĕлĕ» отношенисем тума пулнисĕр пуçне, хађхи вăхăтра икĕ государствине уйăрса тăракан чикĕсене пушă сăмахна йышăннисĕр пуçне, урăх нимĕн те çук пулсан та, пур майсемпе те çÿлеле çĕклеме тăрăшаççĕ.

Тĕрĕссипе Франципе Германи иккĕшĕ пĕрле тунă декларацине алă пусни Францишĕн пысăк хăрушлăх пулса тăраť. Германи Австрипе Чехословаки çине тапăнас умĕн Германи фашисăмĕ çав çĕршывсемпе килĕшÿлĕ пурнам пек туса выљаса хăтланнине манас пулмасť, Германи фашисĕсем çав çĕршывсене халĕ Францийе паракан сăмахсем пек сăмахсене темиçе хут та панă. Фашисла захватчиксем хăйсем тапăнма шутланă çĕршыва илĕртсе астарма вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Шăпах çакăн пек вăйă туса пыраť те ĕнтĕ фашисла Германи хађхи вăхăтра хăйĕн хĕвеланăçĕнчи кÿршине, Францине йертсе пыракан çынсем çав ĕçре ăна кăмăл туса йышăнса кĕтсе илеççĕ.

Франципе Германи декларацийĕ Францин шалти ĕçĕсене Германи тÿррĕмĕнех хутшăнас хăрушлăха пытарса тăраť. Франциpи хăшпĕр хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Риббентроп Парижре хăйĕн Францири партнерĕсене Францин ĕлĕкрех тунă тулашри политикăлă договăрĕсемпе обйазатĕлствисене тепĕр хут пăхса тухтарма хăтланнă. Мĕн тума çавăн пек хăтланни йăлтах уççăн куранаť: Германи Францине пачах та тăр пĕччен тăратса хăварма тăрăшаť, мĕншĕн тесен, ăна пырса çапма çăмăл пулаť. Çавăн пекех Риббентроп Францине «пичет çинчен килĕшÿ» тутарма хăтланнă, çав килĕшÿ тăрăх Германи фашисăмĕ Францири общественнăç шухăшне тÿррĕмĕнех хĕсме шухăшлаť. Йулашкинчен, Германин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Францине йертсе пыракан çынсене тÿррĕмĕнех йе тÿррĕмĕнех мар, пурĕпĕрех, рабочи йухăмне тата халăх фронтне пĕтерсе лартма чĕннĕ.

Риббентроп Парижре çавăн пек активлăн хăтланни Францири общественнăçăн сарлака сийĕсене тарăхтарса йанă. Францири çар влаçĕсен органĕ «Франс милитэр» Кюньяк генерал çырнă умстаťйана пичетлесе кăларнă, вăл çапла çырнă: «Францин обйазăннăçĕ çĕнĕ документа урăхла каласан, Францине Германи декларацине ĕненмесĕр пăхасси пулса тăраť»,—тенĕ. Малала Кюньяк генерал çапла çырнă: «Епĕр Риббентроп господинпа пĕр-пĕрне пит ăшшăн пуç тайатпăр, анчах та епĕр Германи пройекчĕсем çине ĕненмесĕр пăхатпăр».

Францине Германи декларацийĕн чăнчăн тупсăмĕ çакăнтан та уççăн куранаť: ăна пичетлесе кăларни нумайах пулмасť Мÿнхĕнри каварлашува пĕр сăмахсăрах йышăннă Францин влаçри çыннисенчен чылайĕшне хыттăн кăмăлсăрлатнă. Парижри сылтăмла хаçат «Эпок» Франци палатин пĕр депутачĕн—икĕ уйăх кайарах Мÿнхĕнри каварлашува йышăнса çирĕплетессишĕн сасăланă депутачĕн зайавленине пичетлесе кăларнă. Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕн Жорж Боннен политикине критиклесе, çав депутат çапла каланă:

— Мана Жорж Бонне политики хăратаť. Çак етем капитуљацин вĕçĕхĕрисĕр йулашкийĕсене тĕлĕнмеле хăрушлăн курса тăраť, çав капитуљацишĕн вăл никамран ытла ответлă пулса тăраť. Вăл Франци çĕршывĕ хăçан та пулин куçне уçас шухăш пуçне пырса кĕнипе чĕтресе тăраť. Унăн пĕр çул çеç: хăй йышăннă политикă çулĕпе малала кайса тÿрех Германи ытамне кĕрсе ÿкес çул çеç тăрса йулаť.

Францин тулашри политикăлă ларутарувĕ начарланса пынипе пĕрлех çĕршыв ăшĕнчи лару-тăру та çивĕчленсе пыраť. «Мÿнхен политики» Францишĕнче реакци ĕççыннисем çине хыттăн тапăннине пурнăçа кĕрсе пыраť. Даладйе правителствин чрезвычайнăй декречĕсем, ĕçкуние вăрăмлатмала тата ĕççыннисем çине налог хурассине ÿстермеле туса лартнăскерсем, халăх массисене калама çук хыттăн тарăхтарса йанă.

Ĕçлĕхĕн пĕтĕмĕшлĕ конфедерацийĕ нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче чрезвычайнăй декретсене хирĕç протеслесе туса иртернĕ пĕр кунхи забастовкă Францири рабочи клас кĕрешĕвĕнче пысăк тапхăр пулса тăчĕ. Правителствăпа предпринимателсем пĕтĕмĕшлĕ забастовкăна хирĕç рабочи клас тĕлĕшпе массăлă репреççисем тунипе ответлерĕç: забастовкă пулнă хыççăн тепĕр куне рабочисемпе служăшчисене мĕлйун çурă çын ĕçрен кăларса йанă. Суд органĕсем забастовкăра пулнисене тĕрмесене хупмала пригăвăрсем йышăнма халĕ те чарăнмаççĕ-ха.

Анчах йертсе пыракан çынсем çавăн пек репреççисем туса пыни вĕсене çĕршыври халăх массисенчен уйăрса пăрахнă тĕпсĕрлĕхе ÿстерет. Кĕрешÿре пролетари речĕсен пĕрлĕхĕ çирĕпленет, массăсен ăстăнне халăх фрончĕн идейĕ кĕрсе çирĕпленсе пыраť.

Франци халăхĕ реакцине хирĕç, «икçĕр çемйене» хирĕç, çăкăршăн, миршĕн тата ирĕке тухассишĕн кĕрешет. Франци хађхи вăхăтри пек событисемпе тулса çитнĕ кунсене курманни нумай вăхăт пулаť-ха.

И. БОРИСАВ.

# Ĕçлев кĕнекисем памала туни—политикăлă пысăк ĕç

## Ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен" йышăнвă постановленине питĕ пысăк тимлĕхпе вуласа тухрăмăр. Вăл пире, рабочисене, пĕтĕм чĕререн савăнтарат.

Летунсемпе прогуљшчиксем производствăна пысăк сийен тунă. Комбинат администрацийĕ тата профсойуз организацийĕ дисциплинăна çирĕплетессишĕн тимлĕн кĕрешменнипе усă курса производствă дезорганизатăрĕсем ĕç дисциплинине пăсса пынă, комбината йĕркелĕ ĕçлеме, чи кирлĕ заданисене пурнăçа кĕртме чăрмантарнă. Ĕçлев кĕнеки производствă дезорганизатăрĕсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларма май парат.

Епĕ комбинатра 1935 çултанпа ĕçлетĕп. Çак вăхăтра епĕ ĕçе кайа йулса тухни пулман, прогул туман, бÿллетенпе отпускра та пулман. Епĕ хам тăрăшса ĕçленипе стахановец йатне илме тивĕçлĕ пултăм. Епĕ кулленхи нормăна йалан 200 процент тултарса пыратăп. Ĕçлев кĕнеки мана тата та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарат.

Мускаври хапрăк-савăтсенчи рабочи-стахановецсем пĕр савăтра 11 уйăхран кайа мар ĕçлекенсене çеç отпуск памала, производствăра 6 уйăхран кайа ĕçлекенсене пособисем ĕç укçин 25 процентĕ чухлĕ çеç тÿлемелле, тесе сĕнÿсем параççĕ. Епĕ вăл сĕнÿсене пĕтĕмпех ырлатăп.

И. Логунов.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи стољарнăй цехри стахановец.

## Ĕçлев кĕнеки—кам мĕнле ĕçленине кăтартакан чаплă документ

ÇĔМĔРЛЬ. (Хамăр корр.). Комбинатри рабочисемпе служащчисем тата инженерла-техникла работниксем ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен" кăларнă постановленине пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çак постановленине сÿтсе-йавас ыйтупа халĕ комбинатри пур цехсенче те каласусем, пухусем пулса иртеççĕ.

Декабĕрĕн 26-мĕшĕнче авса пуканисем тăвакан цехри рабочисемпе служащчисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Рабочисем Ĕçлев кĕнеки кăлармала тунине пурте пĕр кăмăлпа ырлаççĕ.

— Епĕ производствăра 1926 çултанпа ĕçлетĕп. Йаланах тÿррĕн ĕçлесе пынă. Ун çинчен калакан справкăсем манăн чылай пулнă. Анчах халĕ пурĕшĕсем те çук, хăшпĕрисем çухалнă. Ĕçлев кĕнеки—рабочи мĕнле ĕçленине кăтартакан чаплă документ пулса тăрат. Вăл мана стахановла ĕçлеме хавхалантарат. Епĕ лайăх ĕçленишĕн премисем илни çинчен пĕтĕмпех Ĕçлев кĕнеки çине çыраççĕ. Кунашкал туни рабочи авторитетне çĕклет,—терĕ електромонтор Кровйаков йулташ.

— Епĕ Совет правителстви Ĕçлев кĕнеки памала тăвасси çинчен кăларнă постовленине чĕререн ырлатăп,—тет авса пукансем тăвакан цехри диспетчĕр Власăв йулташ.—Ĕçлев кĕнеки летунсемпе прогуљщиксене, рвачсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларма пулăшат.

## Тÿрĕ ĕçлекен çынсемшĕн тăрăшни

Правителствă «Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен» йышăннă постановлени пиçĕн социалисăмлă предприйатисенче бољшевикла йĕрке тума пулăшат.

Халиччен Ĕçлев кĕнеки пулманни—«пысăк укçа шыракан» летунсемшĕн кăна лайăх пулнă. Пирĕн Шупашкарти «Красный мебельщик» ертелре те ĕç дисциплини çирĕп выранта пулман.

Халĕ ĕнтĕ Ĕçлев кĕнеки памала тунă хыççăн предприйатине йе учреждение çынсене илнĕ чухнех вăл кам, мĕнле çын, летун йе тÿрĕ ĕçлекен çын пулни паллă пулат.

Ĕçлев кĕнеки памала туни пирĕн социалисăмлă çĕршыври предприйатисемпе учрежденисенче стахановла йухăма вăйлатма, ĕç вăйĕ текех улшăнса тăрассине пĕтерме, ĕç дисциплинине çирĕплетме май парат.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Ĕçлев кĕнеки памала тăвасси çинчен» йышăннă постановленичĕ тÿррĕн, тăрăшса ĕçлекенсен шухăшĕсене çырнă. Вăл постановлени пире дисциплинăлă пулма вĕрентет. Çавăнпа та епĕр вăл постановленине чĕререн кăмăлласа йышăнатпăр.

Шупашкарти „Красный мебельщик" ертелри рабочи-стахановецсем:
Н. Петров, Н. Йакавлĕв,
М. Краснов, Н. Сурикăв,
Почичин, Ф. Шипейĕв.

## Ĕçлев кĕнеки лайăх ĕçлеме вĕрентет

Епĕр, Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен ертелри рабочисемпе служащчисем, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен йышăннă постановленине пĕтĕмĕшпех кăмăлласа йышăнатпăр.

Ĕçлев кĕнеки—кам мĕнле ĕçленине куçкĕски çинчи пек кăтартса парат. Вăл кахалсемпе симуљантсене тăрă шыв çине кăларат, тÿрĕ ĕçлекен çынпа прогуљщике уйăрса парат, стахановецсемпе ударниксен авторитетне хăпартат.

Епĕр, ертелри работниксем, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме пулатпăр, прогуљщиксене, кахалсене хирĕç çирĕппĕн кĕрешсе пыратпăр. Лайăх ĕçлеме партипе правителствă пире пур йенчен те лайăх майсем туса параççĕ.

Ленин йачĕпе тăракан ертелри стахановкăработницăсем: Кисељова, Мăатникăва, Горелова, Молодсва, Мочалова, Рукавишникăва.

Совет Сойузĕн хулисем тăрăх.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Дон-çи-Ростоври Енгельс урамĕнчи пурăнмалли çĕнĕ çурт.
В. Бурштейнпа Г. Дружељубăн фото-ÿкерчĕкĕнчен (Бюро-клише ТАСС).

# ХĔРЛĔ ÇАР ПАТТĂРЛĂХĔ

### Совет Сойузĕн Геройĕ В. П. Винокурăв йулташ Шупашкар хулинчи пичет работникĕсемпе тĕл пулни

Декабĕрĕн 26-мĕшĕнче, Пичет çуртĕнче Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусен участникĕ Совет Сойузĕн Геройĕ аслă лейтенант Вйачеслав Петрович Винокурăв Шупашкарти пичет ĕçĕнче (хаçат редакцисенче, издателствăсенче, типографинче) ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕ.

Пичет работникĕсем мухтавлă Геройа пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. В. П. Винокурăв йулташăн калавĕ Хасан кÿлли патĕнче пулнă историле событисем çинчен калакан чаплă епопейă пек йанăраса кайрĕ. Вйачеслав Петрович каланă чух, тĕлпулура пулнисем темиçе хутчен те тăвăллăн алă çупса, ура çине тăрса, пирĕн Хĕрлĕ Çарăн паттăр пограничникĕсемпе боецĕсене, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа саламларĕç. Пичет работникĕсем Винокурăв йулташа паха парнесем пачĕç.

Пайан епĕр Винокурăв йулташăн сăмахне çырса илнине кĕскен пичетлетпĕр.

* * *

Епĕ кунта сире пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Йапони самурайĕсене мĕнле хăваласа кăларни çинчен каласа паратăп.

Хасан кÿлли патĕнчи событисем, ийулĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух, çĕрле пуçланчĕç. Пирĕн канăççăр кÿршĕ çак ĕçе пуçлама уйчченех хатĕрленсе пынă. Ийулĕн пуçламĕшĕнчех Йапонин Мускаври посолĕ Сигемицу Пут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинăв йулташ патне пырса ыйтусем лартнă.—Заозернайапа Безымйаннайă высотасем Манчжурипе Корейă халăхĕсен, — тенĕ посол. Манчжурипе Корейă халăхĕсем çав высотасем çинче хăйсен тĕп йалипе сулсерен уйавсем иртернĕ имĕш.

Кунта пирĕн Литвинăв йулташ Йапони посолне тивĕçлĕ документсемпе тивĕçлĕ картăсем кăларса кăтартат. Çав документсем тăрăх Заозернайапа Безымйаннайă высотасем никамăн та мар, Совет Сойузĕн харпăрлăхĕ пулса тăни çинчен каласа парат.

Йапони посолĕ дипломати пулăшманнине кура çав высотасене ирĕкпе памасан вăйпа илетпĕр, тесе хăратма пăхат. Пирĕн Литвинăв йулташ та кунта тивĕçлĕ çĕре шăнкăртаттарат, чĕнмен хăнасене «лайăхрах» кĕтсе илме систерет.

Вара епĕр чăнипех те вăйлăн кĕтсе илтĕмĕр чĕнмен хăнасене.

Хăйсем тĕллĕн илесессĕн, Йапони самурайĕсем хапсăннă Поçет районĕнчи çĕрсем нимĕнле пуйанлăхпа та уйрăмăн паларса тăмаççĕ, шурлăхлă, ырхан çĕр лаптăкĕ темеле. Анчах çав пĕчĕк çĕр лаптăкĕ Совет государствин социалисăмлă харпăрлăхĕ пулса тăрат. Епĕр çав социалисăмлă харпăрлăх çумне никама та тĕкĕнме ирĕк памастпăр. Ана хапсăнма пăхнă Йапони военщинине пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Хасан кÿлли çывăхĕнче тивĕçлипе çапса аркатрĕ. Ун событисем пĕтĕм тĕнчипе аслă Совет Сойузĕн хăвачĕпе вăйне кăтартса пачĕç, тĕнчери лару-тăрăва, мирлĕ саманашăн кĕрешес ĕçе паха улшăнусем кĕртрĕç.

Епĕр пирĕн Хĕрлĕ Çарăн вăйне пĕтĕм тĕнче умĕнче ĕçре кăтартса патăмăр.

Мĕншĕн-ха Йапони самурайĕсем йаталасах çав высотасене илме хапсăннă? Безымйаннайă высотан çÿлĕшĕ 150—200 метр, Заозернайан—200—250 метр пулат. Çав высотасем умĕнче пирĕн çĕр таçта çитийех пĕр тикĕссĕн сарăлса выртат. Çак высотасем çинчен, сăмахран, Владивосток хули курăнат. Урăхла каласан, çар стратегийĕ йенчен ку высотасем питĕ йурăхлă вырăнсем пулса тăраççĕ. Самурайсем пирĕн çине вăйсăр çĕршыв çине пăхнă пек пăхнă пулас. Вĕсем çак высотасене илсе хăйсен аллинче хăварма шутланă.

Анчах шутланинчен нимĕн те тухмарĕ. Епĕр шаккарăмăр вĕсене. Кирлĕ пулсан татах та шаккăпăр. Ун чух вара Йапони военщини хăйĕн императăрла дивизийĕсене кăна мар, пĕр-пĕр капиталисăмла государствăна та, хăйĕн хăшпĕр утравĕсене те çухатĕ.

Ийулĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух, çĕрле, Йапонин 120 çынлă жандармла роти пирĕн погранзаставăна тапăнат. 120 çынна пирĕн 11 боец кĕтсе илет. Пирĕн паттăр пограничниксем жандармла ротăна пулеметсен вут-кăварĕпе, гранатăсемпе аркатса пăрахаççĕ. Йапонĕцсем чупма çăмăлтарах пултăр тесе, урисене тапăчкăсем тăхăнса пынă пулна, анчах пĕри те тарса ĕлкĕреймен.

Пирĕн пограничниксене пĕр ротă çĕнтерейменнине кура, йапонĕцсем тепĕр ротă йараççĕ. Пирĕн йенчен вĕсене хирĕç пограничниксен пĕр взвод чухлĕ йышĕ тухат. Йапонĕцсем ку расра та нимĕн те тăваймаççĕ.

Самурайсем шăртланаççĕ. Вĕсем хăйсен полевой чаçĕсене ĕçе кĕртеççĕ. Совет чиккине Йапонин императăрла 19-мĕш дивизийĕ тата 23-мĕш уйрăм бригади тапăнат.

Пирĕн пограничниксем кайала 4 километр чакса кĕреççĕ. Йапонĕцсем хăйсем йышăннă вырăнсене васкасах çирĕплетме тытăнаççĕ.

Пирĕн совет командованийĕ, йапонĕцсем совет çĕрĕ çине çакăн пек вăрă-хурахла тапăннине кура, Хĕрлĕ Çарăн полевой чаçĕсене—пехотăна, артиллерине, авиацине ĕçе тухма приказ парат. Çав вăхăтрах чикĕсене пăсмала марри çинчен асăрхаттарат.

Йапонĕцсене хирĕç пирĕн питĕ йăвăр условисенче çапăçмала пулчĕ. Безымйаннайапа Заозернайа высотасем пĕр-пĕрипе хребетпа çыхăнса тăраççĕ, чикĕ çав хребетăн тÿпи тăрăх ÿкнĕ, высотасем умĕнчех Хасан кÿлли тăсăлса выртат, ун тăршшĕ—4—5 километр, сарлакăшĕ—1—2 километр. Йĕри-тавра шурлăх Кÿлĕпе чикĕ хушшинчи çĕр лаптăкĕ 150—200 метр сарлакăшĕнчен ытла пулмаст. Çапла, высотасем патне пирĕн йенчен тÿрех пырса кĕме май çук, пырас пулсан та кÿлĕн икĕ пуçĕнчен çавăрăнса пыма пулат, анчах унта йапонĕцсем уйрăмах хытă çирĕпленсе ларнă.

Кунта çакна асăрхаса йулмала: империалисăмлă вăрçăра, граждăн вăрçинче, çавăн пекех кучухнехи вăрçăсенче пулнă çар специалисĕсем каланă тăрăх, пĕр вырăна кунашкал нумай укрепленисем туса тултарни ниçта та пулман. Йапонĕцсем тата çак вырăнсем патнеле чукун çул хывнă. Операцисем вăхăтĕнче самурайсен бронепойăссем ĕçленĕ.

Анчах Хĕрлĕ Çарăн хурçă чăмăрне йапонĕцсен нимĕнле укрепленийĕ те тÿсеймерĕ. Пытă-самурайсене совет çĕрĕсем çинчен кăларса ывăтсассăн, окопра пирĕн боецсем Йапони офицерĕн дневникне тупнă. Офицера пирĕн Хĕрлĕ Çар ĕçĕ питех те килĕшмен иккен. Аппетит çухатрăм, тăварланă хăйар ĕмкелесĕ çеç пурăнатăп,—тесе çырат офицер.

Епĕр йапонĕцсене августăн 1-мĕшĕнче хыттăн хĕстерме тытăнтăмăр. 1-ш, 2-ш, 3-ш числисенче Йапони çарĕсем высотасем патнеле чакса хĕсĕнеççĕ. Августăн 4—5-мĕшĕсенче епĕр Йапони военщинине пуçĕпех çапса аркатма хатĕрлентĕмĕр.

Августăн 6-мĕшĕ — пирĕншĕн пысăк праçник пулчĕ. Вăл кун Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Уйрăм Хĕрлĕ Йалавлă Çара организациленни 9 çул тултарчĕ. Епĕр вăл куна çапăçу хирĕнче уйавлама шутларăмăр. Боецсем вăл куна уйрăмах пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Пирĕн кашни боец Йапони самурайĕсене пуçĕпех çĕмĕрессине çирĕп ĕненнĕ, шаннă. Епĕр пирĕн хыçра çĕрçитмĕл мĕлйунлă хăватлă совет халăхĕ, пирĕн йуратакан, пире паттăр ÿстерекен халăх тăнине, вăл пире пулăшнине пĕтĕм чĕрепе лайăх туйса тăнă.

Атакă ирхине 10 сехетре пуçланчĕ. Поçет районĕ йенчен пирĕн самољотсен хăватлă кĕрлевĕ илтĕнсе карĕ. Мĕнле çĕкленчĕ çак самантра кашни боецăн чĕри! Совет авиацийĕ ĕçе тытăнат!

Кунта хушăран Йапони авиацийĕ пирки те пĕр-икĕ сăмах каласа хăвармала. Йапони авиацийĕ çапăçăва хутшăнмарĕ. Чăн та, вĕсем малтанах хăтланкаласа пăхрĕç—виçĕ самољот тухнăччĕ, анчах виççĕшĕ те вĕсем часах кирлине туйанчĕç. Мĕн каламалли пур, Йапони самољотне пирĕн самољотпа танлаштарсан, вĕсен самољочĕ—çерçи, пирĕн ăмăрт-кайăк. Йапонĕцсем пирĕн самољотсенчен питĕ хăраççĕ.

Акă кайрĕç атакăна пирĕн самољотсем—малтан разведчиксем, вĕсем хыççăн бомбардировщиксем, унтан истребителсем.

Пирĕн самољотсем чăнах та хытă ĕçлерĕç вара! Фантазерсем хăйсен шухăшĕнче çав картинăна чухлама пултарĕç тесе шутлатăп. Фронтăн сарлакăшĕ—4 километр, тарăнăшĕ—3 километра йахăн, вăт çак лаптăк çинче пĕтĕм çĕр, Йапони çарĕсен укрепленисемпе чаçĕсем кисренсе сывлăша çĕкленчĕç, тĕтĕмпе тăпраран, укрепленисен татăкĕсĕкĕсемпе самурайсен ÿт татăкĕсенчен хутшăнса пулнă хура чаршав пĕр километр çÿлĕшне йахăн виçĕ сехет хушши сывлăшра çакăнса тăчĕ.

Бомбардировкă хыççăн епĕр хамăр высотасене паллайми пултăмăр—пĕтĕмпех урăхла пулса тăнă вĕсем.

Аван ĕçлет совет авиацийĕ! Çапса ÿкерет, çавăнтах çĕрпе хупласа хурат—самурай виллисене пытарас хуйăх çук. Авиаци çапла виçĕ сехет хушши ĕçленĕ хыççăн, талкишлĕ хурçă стена пулса, пирĕн хăватлă танксем атакăна кĕрсе кайрĕç.

Малтанхи кунсенчех йапонĕцсем пирĕн танксене хисеплемесчĕç. Совет Хĕрлĕ Çарĕн чăн-чăн танксем çук, совет танкĕсем фанерăран тунă моделсем çеç тесе вĕрентнĕ иккен вĕсене, çапла малтанхи кунсенчех йапонĕцсем пирĕн танк çине ушкăнăн-ушкăнăн тапăнма пăхатчĕç, ăна гранатăсем пăрахса сиктерме хăтланатчĕç. Анчах кайран пирĕн танксем пули-пулми арканманнине курсан, пирĕн танксем вĕсене тупăран та пулеметран та çунтарнине хăйсен пуçĕсем çинче туйса илсен, танксене хисеплекен пулчĕç. Танкран хайхи вĕсем çухăра-çухăра тара пуçларĕç.

Малала В. П. Винокурăв йулташ уйрăм боецсем самурайсене «хирĕç мĕнле паттăрлăхпа çапăçни çинчен каласа парат.

— Акă Кузнецов танкиса илер. Августăн 5-мĕшĕнче Кузнецов танкис ман пата пырат те, ун екипажĕнчи механик-водител Кисељов комсомола кĕме шутлани çинчен пĕлтерет. Епĕ ырларăм çеç ку пархатарлă шухăша. Кисељов йулташа çав кунах комсомола илчĕç. Кузнецовăн екипажĕ августăн 6-мĕшĕнче комсомолла екипаж пулса атакăна кĕчĕ. Безымйаннайа высота умĕнче Кузнецов танкне йĕтре лекет. Танк чарăнат. Танкиссем тăшмансене вырăнтанах çĕмĕреççĕ. Танка Йапони салтакĕсем çавăрса илме хăтланаççĕ, танкиссем вĕсене пулеметран сăптăраççĕ. Унтан вĕсем танкран тухса, йапонĕцсене хирĕç пехотăпа пĕрле çапăçма шутлаççĕ. Танкран тухнă чух Кисељов йăвăррăн суранланат, анчах йулташĕсем ăна пăрахмаççĕ, вĕсем танк ăшĕнчен мĕн илсе тухмалине пĕтĕмпех илсе тухаççĕ те, суранлă йулташне пăрахмасăр, вăйлă тăхлан çăмăрĕ айĕнчех хамăрăн çĕр çине чакса кĕреççĕ. Кисељов хăй суранне тÿсеймесĕр вилет, анчах тăван çĕр çинче, хăй йулташĕсен аллинче. Йапонĕцсем çапăçура суранланнă хăйсен салтакĕсене алă çинче мар, кантрапа йăлласа илсе сĕтĕреççĕ.

Акă пирĕн боецсен паттăрлăхĕ çинчен калакан тепĕр факт.

Барабанăв комсомолецăн танкне вăйлă атакăра, çунтаракан йĕтре тивнипе, вут хыпса илет. Барабанăв йулташ çухалса каймаст. Вăл йĕри тавра вĕçĕмсĕр тăхлан çуннипе пăхмасăр, танк ăшĕнчен сиксе тухат те çулăма сÿнтерет. Унăн аллисемпе пит-куçĕ пиçсе кайат, пуçĕнчи çÿçĕ çунса кайат, анчах çапах та çулăма сÿнтерет, хаклă машинăна та, унтан хаклăрах çынсене те çăлса хăварат.

Кунашкал примерсем тата та нумай илсе кăтартма пулат.

Пирĕн хĕрлĕ пехотинецсем те питĕ паттăррăн çапăçрĕç. Пирĕн пĕр пехотинец виç-тăватă йапонеца хирĕç, хăш чух 12 йапонеца хирĕç те çапăçнă. Пирĕн пехотинецсем çапăçнă чух самурайсен пуç каптăшкисем çеç сирпĕнеççĕ.

Августăн 6-мĕшĕнче епĕр йапонĕцсене Безымйаннайа высота çинчен çапса антартăмăр, Заозернайан хăшпĕр пайне йышăнтăмăр. Августăн 7-мĕшĕнче кунĕпех хăватлă çапăçусем пычĕç. Августăн 8-мĕшĕнче Заозернайа высота çинче те хĕрлĕ йалав çĕкленсе çирĕпленчĕ.

Мĕншĕн-ха пирĕн боецсем хамăрăн тăван çĕршыва çакăн пек паттăррăн хÿтĕлеççĕ?

Пирĕн Хĕрлĕ Çар — аслă та хăватлă совет халăхĕн çарĕ, вăл пĕтĕмпех халăх интересĕсемпе пурăнат, çав интересене сыхлат. Пирĕн боецăн паттăрлăхĕ иксĕлми тулли, вăл паттăрлăх—совет халăхĕн паттăрлăхĕ.

Çапăçусем хыççăн госпитаљсенче выртнă чух, йалсем витĕр тухнă чух пирĕн боецсене тĕлĕнмеле ăшă тăванлăх çавăрса илчĕ. Кашни боец аслă Совет Сойузĕн мĕнпур кĕтесĕсенчен çĕршер, пиншер çырусем, парнесем, саламсем илет. Кашни çырура, кашни сăмахра епĕр пирĕн совет халăхĕ хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарне мĕн пек хытă йуратнине куратпăр, çав йуратăва чĕрепе туйатпăр.

Епĕр халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ пиреншĕн мĕнле тимлĕхпе тăрăшнине, çапăçусем вăхăтĕнче вăл кашни пĕчĕк ĕçпе интересленнине епĕр лайăх туйса тăнă. Пире çакăн пек пăхни тискер тăшмансене кĕске вăхăтрах çĕмĕрсе тăкма вăйхават, паттăрлăх пачĕ.

Госпиталљре чухне, епĕ Владивосток хулинчи 23-мĕш шкулти 1-мĕш класра вĕренекен 8 çулхи хĕрачаран çыру илтĕм. «Командир пиччe, епĕ сире хам пĕчĕккĕ пулнипе, çапăçура пулăшма пултараймастăп, ÿссе çитсен, обйазателнă госпиталљре ĕçлекен сестра пулатăп» тесе çырат çав 8 çулхи патриот.

Çапăçусем хыççăн, ĕçсыннисем пĕтĕм ватти-вĕттипе пире кĕтсе илме тухрĕç. Манăн Инçетри-Хĕвелтухăçĕнче тăвансем çук, анчах çак самантра манăн кашни хĕрарăм ман тăван аппе, тăван аккасем йăмăксем, кашни арçын—тăван атте, тăван пичче пулса тăчĕç.

Икĕ талăк хушши Йапони территори çинче пулса, епĕ, суранланса пĕтнĕскер, йун питĕ нумай çухатнăччĕ. Çапăçусем хыççăн, мана кашни сывă çын хăй йунне пама хатĕр пулчĕ.

Акă тĕлĕнмеле тĕслĕх: тăван ывăле çапăçура вилнине пĕлсессĕн, çак боецăн 65 çулхи ашшĕ Инçет-Хĕвелтухăçне инçетри Украинăран хăйĕн иккĕмĕш ывăлне илсе пычĕ. Ватă мучи аслă ывăлĕн тăпри çинче тупа туса, кирлĕ пулсан тăван çĕршыва сыхлама хам та тăратăп, терĕ.

Ăçта, мĕнле çĕршывра курма пулат, пирĕн совет халăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарне йуратнă пек, йуратнипе? Çак йурату пире паттăрла ĕçсем тума хавхалантарса пырат. Совет халăхĕ йуратнипе пирĕн Хĕрлĕ Çар тĕнчере никам çĕнтерейми хăватлă, паттăр.

* * *

Совет Сойузĕн Геройне В. П. Винокурăв йулташа типографинчи рабочисем, пичет работникĕсем тухса хĕрÿллĕн саламларĕç, парнесем пачĕç. Чăвашсен ватă поечĕ Н. И. Шелепи чаплă Геройа сăвăпа тухса саламларĕ:

Вйачеслав Петрович
Винокурăв,
Салам, Совет Сойузĕн
Геройĕ!

Аллусем сан хурçă—
Çĕнтереççĕ;
Ворошилăв пек
Тĕл переççĕ.

Хасан кÿлли патĕнче
Çĕр кисретрĕç;
Йапунсене çапса
Сирпĕтрĕç.

Йунлă мул хуçисен
Йунлă сăнни
Хасан кÿлли патĕнче
Хуçăлчĕ.

Паттăр Хĕрлĕ Çарăн
Хурçă чĕри,
Орденлă ывăлĕ
Сывă пул!

Сан пек паттăрсемпе
Çапла епĕр
Сталин йалавĕпе
Çĕнтеретпĕр!

Ĕçхалăхĕн хурçă
Крепăçĕ
Сывă пултăр паттăр
Хĕрлĕ Çар!

## Парти Обкомĕн пленумĕн решенисене пурнăçлассишĕн

ПАТАРЙЕЛ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Çĕнĕ-Шăхран йалсовечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум парти Чăваш Обкомĕн II-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене сÿтсе-йаврĕ. Пленум решенийĕсем çинчен райком представителĕ Морозăв йулташ доклад туса пачĕ.

Пленумра Çĕнĕ-Шăхран йалсовечĕ укçа-тенкĕ пухассине тата государствă умĕнчи обйазателствăсене парса татас тĕлĕшпе 4-мĕш квартăлта начар ĕçленине палăртрĕç. Укçа-тенкĕ пухас плана 4-мĕш квартăлта 51 проц. тултарнă, государствăна çĕрулми тăратассине 43 проц. çеç тултарнă. Тырă тăратас, натурплатă парас плансене те тултарман. Йалсовет председателĕ Родионăв хăй те çĕрулми парса татман. Çавăн пекех йалсовет секретарĕ Тихонăв пĕр центнер ытларах паман. Йалсовет членĕ Парков Григорий государствăна çĕрулми тăратман, налогпа страховкă укçисене тÿлемен. Ревизи комиççи председателĕ Смирнов государствăна çĕрулми тăратман. Пленум йалсовечĕ активпа ĕçлемennине палартрĕ. Йалсовечĕ активран уйăрăлса кайнă. Йединоличник Корсаков Андрей йалсовет работникĕсене хăйĕн куçĕнчен пăхтарнă. Вăл: «епĕ ревком», тесе йалсовет работникĕсене пыра-пыра вăрçнă. Хăй лаша çине хунă налога 100 тенкĕ анчах тÿленĕ.

Çавăн пекех пленум райфинпайĕ жалабăсем çине çаврăнса пăхманнине кăтартса хăварчĕ. Йединоличниксем Чепайкин Илйапа Чепайкин Александр лаша налогĕсене тÿлеменни çинчен районри финанс пайне çырса пĕлтернĕ пулнă. Анчах районри финанс пайĕ ку ыйту тăрăх нимĕн те туман. Корсаков Андрейа лаша налогне тÿлеменшĕн нойаберĕн 4-мĕшĕнче суд тунă пулнă. Çакна районри финанс пайĕ декаберĕн 11-мĕшчен ним шарламасăр тытса усранă, суд туса панине шыраса илмен.

Калас пулат, пленумра самокритикă вăйлах пулмарĕ.

Пленум йалсовет йулса пынине пĕтерес тĕлĕшпе татаклă ĕçсем туса иртерме йышăнса хăварчĕ.

Д. Макарăв.

## Лекци иртерчĕ

ПСК(б)П Вăрвар райкомĕн агитаципе пропагандă пайĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тăрăх парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен йулташсене пулăшас майпа, декабĕрĕн 22-мĕшĕнче „Материалисăм тата идеалисăм" темăпа лекци иртерчĕ. Лекцине паргкабинет пуçлăхĕ Вољникăв йулташ вуларĕ. Лекци итлеме коммунистсемсĕр пуçне комсомолецсем тата совет интеллигенцийĕ те (учителсем, государствă учрежденисенчи служащчисем) 60 çын ытла пынă.

Е. Волкăв.

## Государствăна тырă сутаççĕ

ЕЛĔК. Шĕмшеш йалсоветне кĕрекен „Вай" колхоз 45 центнер, „Трактăр" колхоз—40, „Бољшевик" колхоз—30, „Новая победа" колхоз—30, „Паровоз"—30, „Заря коммунизма" колхоз—20 центнер тырă сутрĕç. Ку ĕçре йалпо правлени председателĕ Бархатăв, йалсовет председателĕ Йефимăв, вулав çурт пуçлăхĕ Николайĕв йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Н. Андрейĕв.

## Колхоз театрĕ гастрољре

Сĕнтĕрвăрринчи пĕрремĕш колхоз театрĕ декабĕрĕн 21-мĕшĕнче гастроле тухса карĕ. Вăл Шупашкар, Çĕрпÿ, Тутаркас районĕсенче пулат. Театр районсенче 10 кун хушши пулса 15 постановкă парат.

С. Апакайĕв.

## Хирургсен Пĕтĕм Сойузри сйесĕ

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче Харьковра хирургсен Пĕтĕм Сойузри 24-мĕш сйесĕ уçăлнă. Сйесăн хисеплĕ председательне Сталин йулташа суйланă. Çав кунах Сталин, Молотăв, Ворошилăв тата Хрущчов йулташсем патне саламсем йанă.

Хирургсен Пĕтĕм Сойузри сйесĕ çĕршыври институтсенче, пуљницасенче, клиникăсенче пухнă калама çук пысăк опыта итог туса памала. Çак сйес çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчипех пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен, пĕтĕм тĕнчери хирурги наукинче совет хирургийĕ питĕ пысăк та паллă вырăнта тăрать. Çапла, сăмахран, йун йамали, йуна консервламали хăшпĕр меслеене совет учонăйĕсем чи пуçласа туса хатĕрленĕ.

Совет хирургĕсен сйесĕ çĕршыва сыхлас ыйтусем уйрăмăнах паллă вырăн йышăнса тăнă вăхăтра пухăнчĕ. Сйес ĕçĕсен кун йĕркинче сурансенчен, пиççе кайнисенчен сыватасси çинчен ыйту тăрать.

Декабĕрĕн 26-мĕшĕнче сйес ĕçе пуçăннă. Сйес ларăвĕн председателĕ—наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Спасокукоцкий профессăр. Кăнтăрлахи ларура сурансенчен сыватасси çинчен наукăлă докладсем 10 итленĕ. Ку докладсем совет науки хирургин çак питĕ те кирлĕ пайĕнче тунă çитĕнÿсен итогне туса параççĕ. Докладсене питĕ пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Руфанăв, Мељникăв, Рахманăв профессăрсем тата ыттисем те сурансенчен сыватмали интереслĕ çĕнĕ меслесем çинчен каласа панă.

Çак ларурах Гирголав профессăр тухса каланă, вăл хăй сăмахĕнче: Германи фашисăмĕ хÿтлĕхсĕр йеврей халăхне тискер кайăкла çĕмĕрет, совет учонăйĕсен сйесĕ çак ирсĕр факт çине лăпкă кăмăлпа пăхма пултараймасть, тесе каланă. Сйеса пухăннисем резољуци йышăннă, вăл резољуцире совет хирургĕсем вунă пин çынлă çарĕн сйесри представителĕсем фашисла палачсене хирĕç, Германири хÿтлĕхсĕр йеврейсем тĕлĕшпе тискер погромсем тăвакан фашисла палачсене хирĕç, малта пыракан пĕтĕм етемлĕхпе пĕрле çиленсе тарăхаççĕ.

(ТАСС).

## ТАСС пĕлтерни

Совет Сойузĕн Миланри консуљствине хупни çинчен пĕлтернине май, ТАСС авторитетлă вырăнтан çакна пĕлнĕ: консуљствăна хупасси Итали фашисĕсем Францине хирĕçле демонстраци вăхăтĕнче совет консуљстви çуртне хирĕç хулиганла харкашу тунă пирки пулнă. Хăй вăхăтĕнче пĕлтернĕччĕ, хулигансем консуљствăн чÿречисене ватнă, ăйăка сийен тунă пулнă. Милан хулинчи префект çакăн пирки пăшăрхании çинчен Совет консуљствине пĕлтернĕ пулсан та, Совет посолĕ çак ĕçе йĕрлесе тухма тата айăплисене кирлĕ пек айăплама ыйтнă пулсан та Итали правителстви килĕшÿлĕ ответ паман. Çакăн пирки Совет правителстви Итали правителствине, Миланра йĕркеллĕ ĕçлеме гаранти çуккине кура, çак консуљствăна хупма шутлани çинчен пĕлтернĕ тата çакăн вырăнне Италии Одессăри консуљствине пĕтерме хушнă.

## Испани Мароккинчи пăлхавсем

ПАРИЖ, декабĕрĕн 26-мĕш. Танжертан Еспаљ агентствине декабĕрĕн 23-мĕшĕнче Ларачера (Испани Марокки) айăллă пăлхаву пуçланса кайни çинчен пĕлтернĕ. Вăл пăлхаву халăхсем хушшинче çĕрулми валеçнĕ вăхăтра тухса кайнă. Ларачера çынсем икĕ уйăх хушши апат-çимĕç продовољствисĕр нуранă. Çакăн хыççăн тивĕçсем тăрăх йут çĕршывсенчен çĕрулми илсе пынă пулнă. Вăл пăлхавра темиçе çын вилнĕ. Фашиссен влаçĕсем 100 çын ытла ăрестленĕ. Фашисла пăлхавçăсем Испанине йама пĕр пин салтак хатĕрленĕ пулнă, палхавçăсен влаçĕсем пăлхав сарăлса кайасран хăраса вăл салтаксене Ларачера тытса тăнă.

(ТАСС).

## Карел Чапек вилнĕ

ПРАГА, декабĕрĕн 26-мĕш. Чехословакин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Прагă хулинче Чехословакири паллă писатĕл Карел Чапек ÿпке чирĕпе вилнĕ.

(ТАСС).

—о—

## Ĕçлев кĕнекисене пичетлеççĕ

Ленинградри „Печатный двор" типографи Ĕçлев кĕнекисене туса хатĕрлеме тытăннă. Вĕсене лайăх хут çинче пичетлесе кăлараççĕ.

„Печатный двор" Ĕçлев кĕнекине 5 мĕлйун екземпљар туса кăларать. Ленинградри ытти типографисенче 2 мĕлйун кĕнеке пичетлеççĕ.

(ТАСС).

*Леонид Первомайский*

## Трипољйе паттăрĕсене

Масар мар, куççуљ мар, чечек мар,—
Йулчĕç чаплă ĕçсем асăнма.

Вилтĕр-çке есĕр Днепр çинче,
Чап çÿрет халĕ сирĕн çинчен.

Сирĕн ÿтĕр пĕрлешнĕ çĕрпе—
Хурлăх ÿçрĕ ăшра ерĕм пек.

Тупăпа сухаланнă хирсем,
Ÿсес çук халљ унта ерĕмсем.

Питĕ шăвлăн иртеççĕ çулсем,
Тĕнчене хыпарсем валеççе.

Пирĕншĕн кашни çул—çĕнтерÿ,
Кашни çул—çĕнĕ хăват, çĕн хĕрÿ.

Ахаљ мар, ахаљ мар, ахаљ мар
Тухнă ирĕклĕхшĕн çапăçма.

Ахаљ мар паттăрсем пĕлнипе
Кайнă çав кĕрешÿ çулĕпе.

Выртса йулчĕç вăрçă хирĕнче,
Йулчĕ паттăрлăхĕ пирĕнпе.

Халљ ĕнтĕ кив Трипољйе тек çук,
Йачĕ ун Комсомољйе ку чух.

Халљ унта çĕнĕле пурăнаç,
Çĕнĕ йал хула пек курăнать.

Заверуха, Палей, Дымарец
Уйхирте утнине туйан ес.

Авă вĕсем, паттăрсем, малала
Тек утаççĕ колоннăпала.

Комиссар та—Ритманский пĕрле,
Ĕçлĕ кун Днепрострой пек кĕрлет.

Ей, кĕрле аслати сасси пек,
Çĕнтерÿ йаланах пирĕнпе!

Ахаљ мар, ахаљ мар, ахаљ мар
Тухнă ирĕклĕхшĕн çапăçма.

Епĕр пĕлнĕ вилсе, çĕнтерме—
Тăшмана çĕршывран хÿтерме.

Ылхаву çĕршыв тăрăх çÿрет,
Тăшмана вăл хайаррăн питлет.

Хĕрлĕ çăлтăр, çутат, йăлтăртат,
Пĕрмайах çĕнтерме çул кăтарт,
Пирĕн тек каймала çÿлеле:
Ÿсмеле, ÿсмеле, ÿсмеле.

Украина чĕлхинчен
В. Усли куçарнă.

## Панулми

Аттен хавас та аслă сачĕ
Таса хĕвелпе тулнăçем,
Йăл-йăл кулаççĕ, алхасаççĕ
Кĕрен те хĕрлĕ улмасем.

Кив сăвăпа мана пĕре те
Сĕнксе лармa халљ ырă мар.
Еп савăнсах сета кĕретĕп
Вĕр-çĕнĕ сăвă шырама.

Улмуççисем айпе утатăп,
Таптатăп вăйлă курăка.
Сат ыр сунать мана унтан та
Кунтан та уçă йурăпа.

Йурлаççĕ кайăксем хĕрÿлĕн,
Улмуççисем кăшт чĕтревеç.
Пĕр панулми татса еп илтĕм
Сулăмлине те хитриве.

Ман ывăçа чĕр çимĕç кĕчĕ,
Чух уçă çимĕç, ĕмĕрхи
Хăватлă çутçантаăк сĕчĕн
Чечен те çирĕп чăмăркки.

Çак улмара—хĕвел хĕлхемĕ
Ирхи йанравлă сывлăмсем,
Тыр çăмрисем те чĕрĕ тимĕр—
Пурте пĕрлешнĕ килленсе.

Ăна еп халљ çÿле çĕклетĕп:
— Мухтав сана, таса улма!
Тантăшсене пайан чĕнетĕп
Çак тимĕр çимĕç пек пулма.

Çамрăклăха ан тутăхтарăр,
Вăл пултăр çирĕп те таса.
Чĕресенчи хĕвел кăварĕ
Хаваслăн тăтăр выљаса.

1938. Аркадий Ĕçхĕл.




Ура шутарса ÿкерекен çул çинче.
Д. Дубинский ÿкерчĕкĕ (Бюро-клише ТАСС).

# Куславккана пырсан...

(Фелйетон)

Тĕрлемес станцийĕнче пуйăс çинчен антăм та, çиле май Куславккана вĕçтеретĕп. Часрах çитсе ăшă хватере вырнаçасчĕ те, вĕри йашка сыпасчĕ, тесе ĕмĕтленсе пыратăп. Вара, ресторана кайса ларма та йурать...

Атăл хĕрне çитрĕм. Умра сивĕ мучи алсăр-пуртăсăр хывса панă йăка кĕпер сарăлса выртать. Кĕпер çинче тÿпери кăç хуралçан йăлтăркка ачисем ташлаççĕ. Атăл леш йенчи хăва тăррисем хумханаççĕ.

Поçолăка кĕресси нумайах та йулмарĕ ĕнтĕ.

— Мĕн марччĕ çав çу кунĕ!,— тесе калаçнă сасса илтех карăм. Çаврăнса пăхатăп. Çыран хĕрринче тăлăп тăхăннă çын тăнине курах карăм. „Мĕн шырама килсе тăнă-ха кунта?" Тăруках тĕрлĕ шухăш пырса çапăнчĕ ман пуçăма. «Иртнĕ йăхсăр йуратуна асаилсе чуне лăпламтарма килнĕ-ши ку çын?»

— Гражданин! Есĕр хĕл çине тивĕççĕр ÿпкелеттĕр. Хĕл кăйне май илемпе пуйан,— терĕм.

— Ăнах пĕлмен çын та пур-ши вара тĕнчере?—куçне Атăл леш йенчен каçармасăрах хирĕç чĕнчĕ тăлăплă çын.

— Хÿхĕмччĕ-и мĕн?—тесе ыйтрăм епĕ.

Ман сăмахсем чĕрене тиврĕç пулмала, тăлăплă çын тăруках ман йенелле çаврăнса тăчĕ те:—Мĕн хÿхĕмччĕ?—тесе ыйтрĕ.

— Мĕнне хăвăр лайăх пĕлеттĕр ĕнтĕ.. калăпăр, çу... йемйешĕл курăк-чечексем,—терĕм аййăнтарах кулса.

— Çапла... Хÿхĕмччĕ çу кунĕ... çакăнтах та выртса çывăрма пулатчĕ вĕт. Халĕ хĕлле. Ăнланаттăр-и есĕр, хĕлле!

Йулашки сăмахĕсене вăл, хăй сассинчен тухса хыттăн калани «ку çын аташма пуçламан-ши» тесе шухăшлаттарчĕ мана. Татах кулса калаçсассăн темĕн курса ларăн кунпала, йăпатсассăн авантарах пулĕ тесе:

— Куславккара хватер çук-и вара, тархасшăн, колхозниксен çуртне атăр,—терĕм.

Тăлăплă çын ахăлтатсах кулса йачĕ.

— Мĕнрен кулаттăр, епĕ чăнах каларăм сире,—терĕм татах.

Кулни кичемлĕ тухнине туйрĕ пулмала хăй те:

— Каçарăр, тархасшăн,—терĕ куллине хытарма тăрăшса,—ирĕксĕртен кулса йатăм. Колхозниксен çурчĕ пулсассăн кам çакăнта сĕнксе тăрĕ.

— Ăçтисем вара есĕр?

— Хуларан килтĕм те, хватер ниçта тупаймасăр çÿретĕп,—терĕ.

Тăлăплă çын çу кунне мĕншĕн асăннине тинех чухланă пек пултăм ĕнтĕ. Тăнă çĕртрех урасем шăнса кайнине туйма пуçларăм. Утса тарланă çан-çурăм сăрлатса карĕ.

— Мĕнле çук? Икĕ хутлă çурт тунине хам куçăмпа курнăччĕ,—терĕм йăвашшăнтарах.

— Тума пуçланăччĕ пулĕ те, халĕ çук. Халĕ вăл çурта учрежденисем йышăннă. Есĕ пур, кирек ăçта кай..

Ку хыпар, манăн çул çинчи ăшă хватере вырнаçас ĕмĕте салатрĕ.

— Атăр, пĕреххутчен ресторана кайса ларар,—терĕм.

Тăлăплă çын хаваспах килĕшрĕ. Ресторанĕ Атăл хĕрринчен инçех мар та часах çитрĕмĕр. Манăн йулташ, ресторана кĕрсенех хăпăл-хапăл тăлăпне хыврĕ те, йĕри-тавра пăхкалать.

Тавçăрса илтĕм:—Ан тăрăшăр, çири тумсене хывса çакас йăла кĕмен-ха кунта,—терĕм пĕлеçи пулса. Манăн йулташ, тăлăпне хулпуççи çине çакрĕ те, зала кĕтĕмĕр. Ансăр тăрăхла чÿрече умĕнче вунă-вуникĕ çын кÿпеленсе тăраççĕ. Шав. Чÿречене шаккаççĕ. Хушăран:—Мана йашка çеç кирлĕччĕ. Мана, хуть те мĕн пулсан та йуратчĕ,—тенĕ йăлăнчăк сасăсем илтĕнсе кайрĕç.

Пĕр хĕрарăм чÿречерен шăнкăрч пек йăлт пăхрĕ те:

— Вунă сехет, йулташсем. Йашка та çук, нимĕн.., буфетран илсе апатланăр,—терĕ.

Сăмах чĕнмесĕрех, вунă сехетрен вара кухњăран нимĕн те паманнине йăлантăмăр ĕнтĕ. Çул çинче вĕри йашка çийес тесе ĕмĕтленсе килни те сайа карĕ манăн. Мĕн тăвас тейĕр есĕр, хисеплĕ граждăнсем, вĕри шÿрпе çук пулсан, сивĕ апатпа та çырлăхма пулать. Епĕр те çапла шут туса сĕтел хушшине лартăмăр. Официанткăсем пырасса кĕтетпĕр. Самайах лартăмăр. Никам та пымаççĕ. Пурте кĕтесри сĕтел умне пуçтарăнса тăнă. Сĕтел хушшинче пĕр вăтамрах арçын апат çисе ларать. Ман йулташ тÿсеймерĕ:—килетĕр-и есĕр кунта?—тесе хыттăн чĕнсе йачĕ.

— Сире мĕн кирлĕ?—терĕ апат çисе ларакан арçын.

Аиккинчи çын чĕнсе ларнипе çилĕ килсе карĕ.

— Сана каламастпăр епĕр, граждании...—сăмах хушрăм епĕ те,—тата нумайччен кĕттереттĕр-и есĕр?—терĕм официанткăсене. Епĕ татса калани килĕшмерĕ пулмала сĕтел хушшинче ларакан арçынна. Çавăр анине илсе пынă кашăкне кайала тирĕк çине йачĕ те:—мана каламастăр еппин, епĕ ресторан директăрĕ Казаков иккенне пĕлместĕр-и есĕр?—терĕ.

— Есĕ пулатăн еппин директăр?—иксĕмĕр те харăс чĕнсе йатăмăр.

— Тăс-с...—пÿрнипе йунарĕ пире директăр,—буфетран харпăрхăй пырса илмеле йĕркене те пĕлмен çынсем-и вара есĕр?—терĕ.

Мĕн тăвас, тейĕр хисеплĕ граждăнсем, харпăрхăй илмеле вĕт, чиперех черете пырса тăтăмăр. Буфетчицăпа сăмах выљатма тапратрăмăр.

— Бутерброд тавраш пур-и?
— Çук.
— Кăлпасси?
— Çук.
— Кукăљ тавраш... булка?
— Çук.

Çук сăмахăн та вĕçĕ пур тесе кăтартасшăн пулмала:—ерех пур,—тесе йачĕ буфетчица йулашкинчен.

— Чим-ха,—терĕ йулташ,—кусемпе палкаса ĕç тухмасть, кайатпăр та дежурнăй магазина, мĕн кирлĕ çавна илсе апатланатпăр,—терĕ. Тăлăпне каллех хулпуççи çине çавăрса çапрĕ те ресторантан тухса кайрăмăр.

Магазин тĕлне çитсе тăнăччĕ, пĕр мучи айккинчен тухрĕ те калать пире:

— Граждăнсем, чарăнса ан тăрăр кунта. Епĕ сторăж, 10 сехет çитнĕ. Магазин хупă...

Урăх нимĕн тумали те йулмарĕ ĕнтĕ пирĕн. Тăлăплă çынпа паллашаймасăрах уйăрăлтăмăр. Вăл каллех çуллахи кунсене аса илсе кăмăлне йăпатма карĕ-и тен. Епĕ хватер шырама çывăхри йалсене вĕçтертĕм.

Хисеплĕ граждăнсем. Есĕр те пирĕн пек инкек-синкек курас мар тесессĕн, Куславккана кайма тухаччен, унта тăван-пĕлĕш-мĕн пуррипе çуккине аса илĕр. Тăван-пĕлĕш çук пулсан, çула тухаччен ик-виçĕ кун малтан кайса хватер хатĕрлĕр. 10 сехетрен кайа йулас пулсан сумкана йашка, çăкăр хăвăрпа пĕрлех чиксе тухăр. Ан манăр.

Н. Мраљка.

## Чăваш красноармейĕçĕсен хорĕ

Приморски крайри Н-ски чаçре Чăваш красноармейĕçĕсем хор организацилерĕç. Хорта 45 çын тăрать, йна красноармейĕц Осипăв йулташ йертсе пырать. Халĕ хор чылай йурăсене вĕренсе çитрĕ. Чăваш хорне командирсем тав турĕç. Хор татах та çĕнĕ йурăсем вĕренет.

Красноармейĕц И. Никифăрăв.

—о—

## Счетчиксен курсĕ

Пĕтĕм Сойузри халăх переписне иртерме уйăрнă счетчиксене вĕрентес тĕлĕшпе Ишлей районĕнче декабĕрĕн 16—19 мĕшсем хушшинче виçĕ кунлă курс туса ирттерчĕç. Счетчиксем переписçе лайăх пахалăхлă тата кăтартулă иртерес тĕлĕшпе пĕр-пĕрипе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç.

Г. Ошмаљ.

## Кĕскен

Ача-пăчасен каткĕ. Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисемпе служăщчисен ачисене валљи хĕллехи каникул тĕлне каток туса панă. Катокăн тăршшĕ 80 метр, сарлакăшĕ 49 метр. Ачасем катокшăн савăнаççĕ, кашни кун заљати хыççăн йаранаççĕ.

Оборонă значокĕсем илнĕ. Улатăрти транспăрт комбинатĕнче вĕренекенсем çак кунсенче 111 ача БГТО, 14 ача ПВХО, 26 ача ГСО, 179 ача Ворошилăвла тĕл перекен çамрăксен значок нормисене парса значоксем илнĕ.

Вĕренекенсен шахмăт турнирĕ. Çак кунсенче Палтайри (Йĕтĕрне р-нĕ) вăтам шкулта 8-мĕш класра вĕренекенсен шахмăт турнирĕ пулса иртнĕ. Турнирта А. Галкинпа А. Краснов пĕррремĕш вырăн йышăннă. Иккĕмĕш вырăна Маркăвпа Лукин тухнă.

## Хроникă

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн 1938 çулти августăн 25-мĕшĕнче йышăннă решенипе килĕшÿлĕн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннă тăрăх, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ çумĕнчи Деткомиççине пĕтернĕ. Деткомиççин производствăлă предприйатийĕсене Чăваш АССР Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариатне панă.

Шупашкарти йăвăç савăтне
ЛАВСЕМ КИРЛĔ
Мари республикинчи Лепшински ялçăран (йăвăç савăтĕнчен 25 километрта)
10 пин кубла метр вутă турттармала
тата Йĕтĕрне вăрман хуçалăхĕн Пошнар участкинчен 7 пин кубла метр йуман болванкăсем турттармала (йăвăç савăтĕнчен 65 километрта). Хакĕсем—килĕшÿ тăрăх. Договăрсене йăвăç савăтĕнче тăваççĕ.
Йăвăç савăчĕ.
3—3

## Республикăри 7-мĕш шашкă турнирĕ

3-мĕш турта И. Ижейĕв 7 ходран Федотăвран выљаса илчĕ. Мишуткин—Никитина, Воскресенски—Стаљукова выљаса йачĕç, Жидков вăхăта усă курма пĕлменнипе, Иванова выљаса йачĕ.

Студенецкипе М. Ижейĕв партийĕ никама та çĕнтерейменнипе пĕтрĕç.

Виçĕ тур иртнĕ хыççăн малта Никитин А. пырать. Вăл 3 партирен 3 очко выљаса илнĕ, ун хыççăн Г. Ивановпа И. Ижейĕв пыраççĕ—вĕсен 2-шер очко.

И. Ижейĕв.

*Суд*

## Ачине вĕлернĕшĕн

Уравăшри (Вăрнар р.) «Пĕррремĕш Май» колхоз членĕ Т. Максимăва йăвăр çын пулнă, вăл кун çинчен никама пĕлтермесĕр пурăннă. Максимăва ачана çуралсанах вĕлерме шухăш тытать.

Çентабĕрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа нойабĕр уйăхчен Максимăва йалта пурăнмасть. Çак хушăра вăл Канаш пуљницине пырса паллакан хĕрачана хăй йачĕпе пăхтарса йăвăр çын пулман тесе справкă илнĕ те, ачана çуралнă хыççăн чул çыхса Çавал шывне кайса йанă.

Вăрнар районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса Максимăва Татйанăна Уголовнăй Кодексăн 136 статйи тăрăх айăпласа 3 çуллăха тĕрмене хупса лартмала турĕ.

Л. Степанăв.

## Редакцирен

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн декабĕрĕн 23-мĕшĕнче тухнă номĕрти „Пĕтĕм Сойузри халăх переписне хатĕрленес ĕçсене татса паракан тапхăр" йатлă умстатйара переписре ĕçлекен кадрсем пирки Вăрнар, Канаш, Трак районĕсем çинчен кивелерех кайнă фактсене илсе çырнă пулнă. Çак районсенче перепис кадрĕсем хатĕрлесси октабĕр уйăхĕнче начар пынă,—халĕ ку çитменлĕхсене тÿрлетнĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

КИЛХУÇИ ХĔРАРĂМĔСЕНЕ
ПĔЛСЕ ТĂМА
СОЙУЗПРОДМАГĂН
„Бакалея" магазинĕсене
СИЊКĂ
сутăлăх килчĕ
Есĕр хăвăрăн кĕпе илемлĕ, йур пек шурă тăслĕ пултăр теттĕр пулсан,
Государствăн „Республика" кипрăкĕнче туса хатĕрленĕ сињкăна йаланах ыйтса илĕр,
йна „Сойузпродмагăн" Шупашкар хулинчи, Канашри тата вакунсем йусакан савăтри „Бакалея" магазинĕсенче йалнах мĕнчухлĕ кирлĕ таранах сутăн илме пулать.

ХĂВĂРĂН ПЕРЕКЕТЛЕНĔ УКÇУ-ТЕНКИСЕНЕ
ПЕРЕКЕТ КАССИСЕНЧЕ СЫХЛАСА УСРĂР!

Перекет кассисене хывнă вкладсем тĕрĕс-тĕкел сыхланса усранассишĕн ССР Союз правителстви гаранти парать.

Перекет кассисене мĕн чухлĕ укçа хывни çинчен никама та пĕлтермеççĕ.

Перекет кассисем вкладчиксене вкладсемшĕн çулталăкра 3 процент доход тÿлеççĕ.

Перекетлевĕ укçа-тенкĕсене перекет кассисенче сыхласа усрама йурăхлă та усăллă.

Чăваш АСС Республикĕнчи ĕççыннисем 52.000 çын ытла перекет кассисенче 13.844 пин тенкĕ ытларах укçа сыхласа усраççĕ.

1937 çулшăн кăна Чăваш республикĕнчи вкладчиксем вкладсем тăрăх 248 пин тенкĕ процент илнĕ.




ПЕРЕКЕТ КАССИН
ВКЛАДЧИКĔ ПУЛНИПЕ,
есĕр пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывăн хуçалăх хăвачĕпе оборонă пултарулăхне малала тĕреклетсе пынă çĕрте хутшăнса ĕçлеттĕр.

Уполномоченный Чуваглавлита № 593 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 881 ф. 6. 58Х84 в. л.